чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

40 /26446/ № Ытлари кун, 2014, пуш (март), 4 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

## Палăртнине пурнăçланă

***Пуш уйăхĕн 3-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республикăн ĕç тăвакан влаç органĕсен, федерацин территори управленийĕсен тата хула округĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ. РФ Президенчĕ 2012 çулхи çу уйăхĕнче бюджет тытăмĕнче ĕçлекенсен уйрăм категорийĕсен ĕç укçине ӳстерес енĕпе йышăннă указсене мĕнле пурнăçланине пăхса тухнă.***

2013 çулта республикăра медицина, педагогика, социаллă тытăмсен тата культура учрежденийĕсен ĕçченĕсен ĕç укçине ӳстермешкĕн малтан пăхнă кăтартусене пурнăçланине палăртнă.

Сывлăх сыхлавĕн тытăмĕнче ĕç укçин шайĕ самаях пысăк пулин те сиплев учрежденийĕсенче медиксем çитмеççĕ. Тухтăрсен вакансийĕсем çинчен пĕлтерсе медицина учрежденийĕсен ертӳçисем тата халăха ĕçпе тивĕçтерекен служба специалисчĕсем ĕç укçин паянхи виçине кăтартмаççĕ. Акă Улатăрта медицина ĕçченĕсем 30% таран çитмеççĕ пулин те тухтăрсене чĕнекен пĕлтерӳре унăн должноç оклачĕн виçине çеç – 6 пин тенкĕ – кăтартнă, çав вăхăтрах чăн ĕç укçи темиçе хут ытларах.

«Ĕç укçин çакнашкал виçине кăтартса ĕçе çамрăк специалистсене мĕнле явăçтарасшăнха эсир? Ку çамрăксен хушшинче тухтăр профессине сивлени пулать!» – тенĕ Михаил Игнатьев. Чăваш Ен Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствине тата Халăха ĕçпе тивĕçтерекен службăна вăл тивĕçлĕ тĕрĕслев ирттерме хушнă. Медиксен ĕç укçине ӳстернĕ май медицина пулăшăвĕсен пахалăхне лайăхлатмалла, çапах та пур çĕрте те çапла пулса пымасть-ха. Уйрăммăн илсен пациентсем больницăсенче тата поликлиникăсенче хăйсемпе кăнттам пулнăшăн, электрон регистратура ĕçĕнче чăрмавсем тухса тăнăшăн, «Васкавлă пулăшу» бригадисем чĕнсен вăхăтра çитменшĕн ӳпкелешеççĕ.

Республика Пуçлăхĕ вĕренӳ министрне Владимир Иванова ĕçлĕ тĕл пулусен вăхăтĕнче çамрăк педагогсем тулли вăйпа ĕçлеменни пирки пăшăрханса пĕлтернине аса илтернĕ. «Шкулсенче 35 çула çитмен педагогсем 14% çеç. Сехетсем çителĕксĕр пулни вĕсен ĕç укçине япăх витĕм кӳрет, çамрăк кадрсене явăçтарма, ĕç вырăнĕсенче çирĕплетме пулăшмасть. Çак ыйтăва урăхларах татса памалла», – тенĕ Михаил Игнатьев.

Канашлăва хутшăннисем Чăваш Енре грипп тата респираторлă вирус чирĕсем енĕпе эпидемиологи лару-тăрăвне сӳтсе явнă. Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Татьяна Богданова пĕлтернĕ тăрăх – 2013-2014 çулсенчи эпидемиологи тапхăрĕ пуçланнăранпа ун умĕнхи эпидсезонăн çак тапхăрĕпе танлаштарсан респираторлă вирус чирĕсемпе, гриппа – 8,8%, ӳпке шыççипе чирлесси 1,9 хут чакнă.

Вĕренӳ тата шкул çулне çитменнисен учрежденийĕсенче гриппа, респираторлă вирус чирĕсемпе чирлекен ачасене пуçламăш тапхăртах палăртас тĕллевпе вĕсене кашни кунах ирсерен тĕрĕслеме пуçланă. Чăваш Ен Пуçлăхĕ грипран тата респираторлă вирус чирĕсенчен сыхланас енĕпе халăха иммунизацилени пысăк вырăн йышăннине палăртнă, ку тĕллевпе укçа шеллемен ертӳçĕсене /ĕç паракансене/ тав тунă.

Юлашкинчен Михаил Игнатьев Шупашкар тата Çĕнĕ Шупашкар хулисен ертӳçисене автомобиль çулĕсем çинчи шăтăк-путăка вăхăтра юсамаллине асăрхаттарнă, ЧР Транспорт министерствине çак ĕçе тĕрĕслеме хушнă.

■ **А.ЛЬВОВА**

*Çăварни*

# Юрт, юрт кăна, утçăм...



С.ЕРМАКОВА сăн ӳкерчĕкĕ

Çăварни – ачалăхра тарăн йĕр хăварнă уяв. Катаччи чупса, çăварни юррине шăрантарса курман эпĕ, анчах та пиртен аслăрах аппасемпе тетесем шăрантарнă çак йĕркесем халĕ те асрах:

Куккуксем чăпар, йăви – кăвак,
Мĕншĕн куккук тесе, ай, калас мар,
Икĕ куçĕ хура, çӳçĕ – сарă,
Мĕншĕн савни тесе калас мар.

Хура вăрман витĕр эп тухнă чух,
Хура лаша тарла, ай, пуçларĕ.
Тусăм касси витĕр эп тухнă чух,
Тусăм курса, ай, йĕре пуçларĕ...

Шел, пирĕн яшлăх çулĕсенче ытла та сайра илтĕнетчĕç Çăварни юррисем. Тĕшмĕшлĕхпе çыхăнтаратчĕç ăна, ун вырăнне «вырăс хĕлне» ăсатса пурăнтăмăр. Çапла икĕ-виçĕ ăру çитĕнсе çитрĕ пулĕ. Акă пăтăрмахлă самана хыçа юлчĕ. Несĕлĕмĕрсен ламран лама куçса пынă йăлайĕркине малалла тытса пырасси, вĕсене аталантарасси пирки çĕршыв ертӳçи хăй канăçсăрланать. Çавна шута илсе 2014 çула Культура çулталăкĕ тесе пĕлтерчĕ. Раççейри вун-вун халăх пекех чăвашсем те туллин усă курма тăрăшаççĕ çак самантпа.





Иртнĕ вырсарни кун Çăварни эрни вĕçленчĕ. Çĕкленӳллĕ кăмăлпа ăсатрĕç ăна хулапа ял çыннисем. Ял урамĕсене ĕлĕкхи пекех капăрлатнă лашасем, çуна çинчи чипер пикесен янăравлă юррисем илем кӳчĕç. Ачапăчапа самай çулланнă кинемейсем те килĕсенче ларас темерĕç, клубсемпе культура çурчĕсен умне – уяв кĕрекине – пухăнчĕç. Кунта вара тем те пур: пыллă икерчĕ те, хăйĕн кун-çулĕ халь-халь вĕçленессе кĕтекен катемпи те... Чи пĕлтерĕшли – ташă-юрă, вăйă-кулă. Çак савăнăçа курмасăр, туймасăр иртермелле-и? Ăна тата тепĕр çулталăк кĕтмелле-и?

Елчĕк районĕнчи Шăмалаксемпе Яманчӳрелсем уява пĕрле ирттерчĕç. Ултă лаша кӳлсе икĕ ял урамĕсемпе Çăварни юррисене янраттарса çӳрерĕç. Йĕри-таврана каç чĕнтĕрĕ карса иличченех илтĕнчĕç çак йĕркесем:

Юрт, юрт кăна, утçăм, юрт, юрт, утçăм,
Çурхи çулсем çӳле, ай, юличчен...

■ **Надежда СМИРНОВА.**

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕсем

## КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

### Чăваш кĕввипе поэзийĕн уявĕ



***Çĕнĕ Шупашкарти Ачасен искусство шкулĕнче Культура çулталăкĕпе килĕшӳллĕн «Илемлĕ кĕвĕ» мероприяти иртнĕ.***

Унăн тĕллевĕ – çамрăк ăрăва чăваш наци искусствине юратма, хаклама вĕрентесси. Чăвашлăх уявне асăннă шкул директорĕн çумĕ Светлана Иванова йĕркелесе ертсе пынă.

Концерт залĕнче çамрăк пианистсем чăваш композиторĕсен кĕввисене шăрантарнă. Театр уйрăмĕнче пĕлӳ илекенсем Петĕр Хусанкайăн, Васлей Давыдов-Анатрин, Раиса Сарпин, Лидия Кубашинăн сăввисене вуланă. Уяв тĕлне кунта РФ тата ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн, Раççей тата Чăваш Ен Художниксен союзĕсен членĕн Татьяна Шарковăн ĕçĕсен куравне йĕркеленĕ. Тĕслĕх вулавăшăн аслă библиотекарĕ Людмила Александрова хатĕрленĕ «Чăваш музыки» кĕнекепе, иллюстраци выставкипе те пухăннисем хаваспах паллашнă. Мероприятире чăваш искусствине халалланă мультимеди презентацийĕ те пулнă.

**А.ГРОМОВА.**

### Чиперуксем ăмăртнă

***Йĕпреçри культура çуртĕнче «Чăваш пики – 2014» район конкурсĕ иртнĕ. Унта тăван ен культурине юратакан 6 ял тăрăхĕнчи 9 чиперук хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарнă. Вĕсем 5 конкурсра тупăшнă.***

Малтанах хĕрсем хăйсемпе паллаштарнă. Унтан чăваш наци апатне хатĕрлеме пултарнине кăтартнă. Ку çеç-и? Илемлĕ сăн-питлисен кăткăс ыйтусене те хуравлама тивнĕ. Çавăн пекех вĕсем чăваш чĕлхине аван пĕлнине те уçса панă. Чăваш хĕрĕсем хăйсен тыткаларăшĕпе, çăмăл уттипе, чун-чĕре илемлĕхĕпе жюри членĕсене кăна мар, куракансене те тыткăнланă. Хĕрӳ тупăшура Диана Козлова «Чăваш пики – 2014» ята тивĕçнĕ. Эльвира Бронникова – «Вице-чăваш пики», Анжела Анисимова «Çутă кулăллă пике» номинацисенче çĕнтернĕ. Диана вара Шупашкарта иртекен «Чăваш пики – 2014» республика конкурсне хутшăнĕ, Йĕпреç районĕн чысне хӳтĕлĕ.

**Р.ИВАНОВА.**

Объявление

## Уважаемые жители Чувашской Республики!

Филиал ОАО "МРСК Волги" - "Чувашэнерго" предупреждает: в связи с наступлением весеннего паводка возникает риск попадания ЛЭП в зоны затопления, что может вызвать уменьшение габаритного расстояния от проводов ЛЭП до поверхности воды и возникновение опасности поражения людей электрическим током.

Для предотвращения несчастных случаев и повреждения ЛЭП просим вас соблюдать меры безопасности (соблюдать допустимые расстояния до токоведущих частей) при прохождении под проводами ЛЭП. Все погрузочно-разгрузочные работы в охранных зонах ЛЭП должны быть согласованы с владельцами этих линий.

Кроме того, в период половодья возможно подтопление жилых домов и частных построек, в которых находится электрическое оборудование. Убедительно просим вас соблюдать меры предосторожности и, по возможности, не включать электрические приборы в сеть в подтопленных помещениях.

Владельцам плавсредств категорически воспрещается приближаться ближе 25 метров к опорам и проводам ЛЭП.

О случаях повреждений ЛЭП просьба сообщать в оперативно-диспетчерские службы производственных отделений филиала ОАО "МРСК Волги" - "Чувашэнерго" по месту нахождения ЛЭП по телефонам:

Северное производственное отделение 8 (8352) 39-95-70.

Южное производственное отделение 8 (83533) 2-14-74.

Алатырское производственное отделение 8 (83531) 2-33-89.



ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

# ХРЕСЧЕНЕ ТИМĔР ШАПА УТТИ ТИВĔÇТЕРМЕСТ

**Чăвашстат çак кунсенче республика агропромышленноçĕн пĕлтĕрхи ĕç кăтартăвĕсемпе паллаштарчĕ. Мĕн пур харпăрлăхлă хуçалăхсен производствин индексĕ 89,3 % пулнă: виçĕм çулхи чикĕрен самаях каялла чакнă. Ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов сăлтавне çулла çанталăк шăрăх тăнипе, ял хуçалăх культурисен пĕр пайĕ пачах пĕтнипе, тепри начар çитĕннипе ăнлантарчĕ. Пĕтĕмĕшле илсен унпа килĕшмесĕр тăма çук. Çапах вăл ӳсен-тăрана апатлантарма удобрени хывнă, агротехникăна пăхăннă чылай хуçалăх тыр-пул тухăçне ӳстернине, шăварнă çĕр улми ялан-хи пекех ăнса пулнине палăртрĕ. Апла пулсан производство чакнин сăлтавĕ типĕ çанталăкра çеç мар.**

**Пирĕн пата тăвата-пилĕк çултан пĕрре шăрăх килессе кĕтсех тăр. Ял хуçалăх культурисем кăна çитĕнтерсе тупăш илме ĕмĕтленни тĕрĕсех маррине, выльăх ĕрчетмесĕр малалла нумай каяйманнине, ытти енĕпе укçа ĕçлесе илмеллине ертӳçĕсем лайăх пĕлеççĕ. Пĕри тупăшсăр хăварма пултарассине планласах тепринчен пайта кураççĕ.**

**Паян кирек хăш хуçалăх та шăваракан агрегат кăна туянаять. Вăрлăх, çĕр улми, пахча çимĕç, ытти культура ытларах туса илме, вĕсене лайăх хакпа сутма пултарать. Çавăнпа уйрăм предприяти каялла чакнине типĕ çулпа тӳрре кăларнипе килĕшес килмест.**

**Услам ытларах тăвас тесен выльăх нумай ĕрчетмелле. Кашни хуçалăхăн совет тапхăрĕнчи пек комплекссем пулмалла. Районсенче çак тĕллевпе малалла талпăнни сисĕнет. ХФХсем йĕркелеççĕ, çемье фермисем уçаççĕ. Анчах йывăр урапа начар кусать: çулталăкра паянхи пурнăç ыйтакан темиçе пысăк вите çеç хута яраççĕ. Хресчене тимĕр шапа утти тивĕçтермест. Çӳлти тытăмри пуçлăхсем тепĕр чух: «Кивĕ фермăсене пĕтермелле, çĕнĕ витесем тумалла», – теççĕ. Тĕрĕс сăмахсем. Компьютер ĕмĕрĕнче дояркăн ĕне çиллине туртса лармалла мар – машинăпа сумалла. Нумаях пулмасть журналистсене Тăвай районĕнчи Турикас Тушкил фермин ĕç-хĕлĕпе паллаштарчĕç. Выльăх пăхакансен çуртне йăлтăр-ялтăр стройматериалпа хăтлăлатнă. Унта вăй хуракансем ĕç хыççăн вĕри шывпа çăвăнса тасалаççĕ. Вĕсене укçа аван тӳлеççĕ. Республикăра çавнашкал ферма чылай. Анчах питĕ çителĕксĕр. Ытларах пулсан нумайăшĕ ĕçлĕ пулĕччĕ.**

**Унта та кунта тĕрлĕ сăлтава пула механизациленĕ выльăх комплексĕ тăваймаççĕ. Тен, кивĕ витесене тĕрлĕ харпăрлăхлă хуçалăхсене парса ĕçе кĕртмелле? Вĕсенче пуçаруллисем выльăх ĕрчетеççĕ-çке. Лайăх-и, начар-и – тупăш тума мая каяççĕ. Апла пулсан киввисене юрăхсăра кăларма иртерех. Паллах, çĕнĕ фермăсем ĕçе кĕртесси – ял çыннишĕн тĕп ыйтусенчен пĕри. Мĕн пур харпăрлăхлă хуçалăхсем хăйсем тĕллĕн ăна татса парасса кĕтсен ялта ĕçлекен çын юлĕши? Выльăх витисем тăвассине палăрмаллах вăйлатмалла. Банксем строительствăна кредит уйăраççĕха. Çапах та республика выльăх комплексĕсем тума ятарлă программа хатĕрлесен лайăхчĕ.**

**Мĕн пур харпăрлăхри хуçалăхсенче майракаллă шултра выльăх 2012 çулта 222900 пуç пулнă, пĕлтĕр 207700 пуç юлнă. Ĕне – 9500, сысна – 8500, качакапа сурăх 3600 пуç каталнă.**

**Килти хуçалăхсем пĕтĕм выльăх хисепне нумай пĕчĕклетнĕ. Майракаллă шултра выльăх виçĕм çул – 148700, çав йышра ĕне 86300 пуç пулнă, иртнĕ çул – 133700, вăл шутра ĕне 77700 пуç шута илнĕ. Сысна, качака, сурăх кĕтĕвĕ аванах каталнă.**

**Ял хуçалăх организацийĕсем ĕне выльăх йышне нумай чакарманнине, сысна кĕтĕвне 6 пин ытла пуç хушнине палăртас килет. Фермер хуçалăхĕсем майракаллă шултра выльăх, уйрăммăн илсен ĕне, качака, сурăх йышне ӳстернĕ. Вĕсен сысна çеç сахалланнă. Ахăртнех, ХФХсенче тата килти хуçалăхсенче сысна кĕтĕвĕ нумай каталнине Африка мурĕнчен тĕрĕс хӳтĕленме вĕренсе çитменнипе ăнлантармалла. Ку ыйтăва ветеринарин патшалăх службипе пĕрле татса памасан кăçал та каялла чакăпăр.**

**Кĕтĕве пĕчĕклетсен выльăхран продукци сахалрах илесси куç кĕрет. 2013 çулта мĕн пур харпăрлăхлă хуçалăхсенче аш-какай, сĕт, çăмарта сахалрах туса илнĕ. Кăçал аграрисен умĕнче выльăх йышне пысăклатас тĕллев тăрать.**

**Тирпейлекен предприятисем ял çыннине сĕтшĕн, ашшăн лайăхрах тӳлеме тытăнчĕç. «Агро-Инновацисем» ХП нарăсăн 22-мĕшĕ тĕлне тирпейлекен предприятисем 1-мĕш сортлă сĕтĕн кашни литрне вăтамран – 21,98, сысна какайĕн /2-мĕш категори/ кашни килограмне 74 тенкĕлле йышăннине пĕлтерет. Аван хак. Çулталăк вĕçленичченех вăл çав шайра тăрсан кăçал кĕтӳ пысăкланма пултарать.**

**Министерство хальхи вăхăтра выльăхран продукци ытларах илессине чи малтанах пĕрлехи хуçалăхсемпе, ХФХсемпе çыхăнтарма тĕллев лартать. Килти хуçалăхсем ĕне выльăх, сысна шутне ӳстересси иккĕлентерет. Вĕсенче 2006-2012 çулсенче качакапа сурăх ăнăçлă хунанă. Пĕлтĕр вăл та каталнă.**

**Патшалăхăн ял хуçалăх производствине ӳстерес ыйтупа ăнăçлă ĕçлесе пыракан пысăк тата вăтам предприятисене ытларах шанма тивет. Вĕсем – АПК пуласлăхĕ. Ял çыннисене ĕçпе тивĕçтереççĕ. Вĕсем лайăх аталансан хресчен аванах пурăнĕ, укçа тума республика тулашне каймĕ.**

**Пĕлтĕр кайăк-кĕшĕк ашĕ туса илекенсене чăх чирĕ ура хучĕ. Унпа ăнăçлă кĕрешрĕç. Кăçалтан аш тата çăмарта ытларах илессе шанатпăр. Сутлăх сĕт хакланнă май ĕнесен продуктивлăхĕ ӳсмелле. Иртнĕ çул ял хуçалăх организацийĕсенчи кашни ĕнерен вăтамран 4515 килограмм сĕт сунă. Чăхсем çулталăкра вăтамран 310-шар çăмарта – виçĕм çулхинчен 0,6 % нумайрах – тунă. Патшалăх хресчене кăçал та тĕрлĕ енĕпе субсиди уйăрать. Апла пулсан продукци ытларах туса илме май пур.**

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

Çанталăк çинчен

Паян улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел тухăçĕнчен çеккунтра 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 5, каçхине 8 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 758 мм, сывлăшри нӳрĕк 87 процент.

**Кун тăршшĕ 10 сехет те 55 минут.**

Ыран уяр çанталăк пулать. Çил çурçĕр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 2 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 4, каçхине 10 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 760 мм, сывлăшри нӳрĕк 84 процент.

**Кун тăршшĕ 11 сехет.**

*Коллеги*

# Культура çулталăкĕнче – çĕнĕ çитĕнӳсем

***ЧР Культура министерствин коллегийĕн анлă ларăвĕнче иртнĕ çулхи ĕç кăтартăвĕсене пĕтĕмлетрĕç тата 2014 çулхи тĕллевсене палăртрĕç.***

Ун ĕçне ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн Ертӳçи Александр Иванов, РФ Федераци Пухăвĕн Федераци Канашĕн членĕ Галина Николаева, ЧР Патшалăх Канашĕн комитет председателĕ Петр Краснов, культурăпа искусствăн паллă деятелĕсем, муниципалитет районĕсемпе хула округĕсен администрацийĕсен представителĕсем, ведомство учрежденийĕсен ертӳçисем хутшăнчĕç.

Александр Иванов салам сăмахĕнче республика ертӳлĕхĕ культура ыйтăвĕсем тĕлĕшĕпе тимлĕ пулнине, патшалăх политики пултарулăх проекчĕсене пурнăçа кĕртме меллĕ условисем туса панине палăртрĕ. Йывăр та пархатарлă çак ĕçре палăрнисене патшалăх наградисемпе чысларĕ, республика Пуçлăхĕн ятарлă стипендине тивĕçнĕ çамрăксене свидетельство пачĕ.

Иртнĕ çулхи ĕçсемпе Вадим Ефимов министр паллаштарчĕ. Вадим Петрович отрасль тунă чылай çитĕнӳ пирки чарăнса тăчĕ. Вĕсене асăнас тăк вăхăт та, вырăн та самай кирлĕ пулĕччĕ. Çапла пĕтĕмлетӳ тунă пулăттăм: çак ĕçсем пушă вырăнта "шăтса тухман", вĕсене пурнăçа кĕртме никĕс, культурăн аталаннă инфратытăмĕ, искусство çыннисен, патшалăх институчĕсен пулăшăвĕ кирлĕ пулнă. Шăпах çаксем пĕр тĕвĕре пулни ӳсĕм кӳме пултарнă та. Çапах та пĕлтерĕшлĕ самантсем пирки те чарăнса тăмаллах. Истори пĕлтерĕшлĕ пулăмсен йышĕнче: Пушкăртстан Республикин Чăваш Енри кунĕсем, Чăваш наци конгресĕн VIII отчетпа суйлав пухăвĕ, "Çул-йĕр картти" мероприятисен планне пурнăçлама пуçлани, ЧР культура отраслне 2020 çулченхи тапхăрчен аталантармалли концепцие, Чăваш Республикин "Культурăпа туризма аталантарасси" 2014-2020 çулсем" патшалăх программине йышăнни тата ытти те. Ведомство учрежденийĕсем республика бюджетĕнчен уйăрса паракан укçапа çеç пурăнмаççĕ, хăйсем те ĕçлесе илеççĕ. Сăмахран, пĕлтĕр бюджет тулашĕнчи ĕç-хĕлпе тупăш 104,7 млн тенкĕ чухлĕ пуянланнă. Çакă 2012 çулпа танлаштарсан 24,6 процент ытларах. Тĕллевлĕ субсиди калăпăшĕ икĕ хут ытларах ӳснĕ, 45,3 млн тенкĕпе танлашнă. Тухăçсăр тăкаксене пĕчĕклетес тĕлĕшпе иртнĕ çул оптимизаци ирттерни 6,5 млн тенкĕ перекетлеме май панă. Çав укçапа ĕç укçи ӳстерме усă курнă.

Культура объекчĕсене реконструкцилеме тата тĕпрен юсама республика бюджетĕнчен 25,3 млн тенкĕ уйăрнă. Музыка инструменчĕсемпе ятарлă оборудованисем, мультимедиа, сасă тата çутă хатĕрĕсем туянма, ытти ĕç пурнăçлама 27,3 млн тенкĕ тăкакланă.

Вадим Ефимов министр отрасль çитĕнĕвĕнчи ытти самант пирки те чарăнса тăчĕ, çапах та туса çитереймен ĕçсем çинчен ытларах каларĕ, вĕсене тĕплĕн тишкерчĕ. Шăпах çав пулăмсем тăван культурăна малалла аталанма чăрмантарнă-çке.

Муниципалитет йĕркеленĕвĕсенчи культура ĕçченĕсен вăтам ĕç укçи пирки çакă паллă: Улатăр, Патăрьел, Комсомольски, Красноармейски, Вăрмар, Шăмăршă, Çĕмĕрле, Елчĕк, Тăвай районĕсенче вăл республикăри муниципалитет культура учрежденийĕсен вăтам ĕç укçинчен /9985,7 тенкĕ/ чылай пĕчĕкрех. Лару-тăруран мĕнле майпа тухма пулать? Министр культура ĕçченĕсене бюджет укçине шанисĕр пуçне, хăйсене пуçарулăрах пулма сĕнчĕ, ĕç тухăçлăхне ӳстерме, тӳлевлĕ мероприятисем ирттерсе ытларах ĕçлесе илме май пуррине аса илтерчĕ. Çак сăмахсем республика шайĕнчи хăш-пĕр коллектив пирки те пулчĕç. Сăмахран, Чăваш патшалăх академи юрăпа ташă ансамблĕ тата Чăваш патшалăх академи капелли, ытти театрпа танлаштарсан, хăйсен вăйĕпе виçĕ хут сахалрах ĕçлесе илнĕ.

Клубсемпе вулавăшсен шăпи те пăшăрхантарать. Республикăн библиотека тытăмĕнче лайăх улшăну чылай пулнă пулсан та – вăраха ямасăр татса памалли çук мар-ха. Халăхра вулав культури чакса пыни шухăшлаттарать. Пĕлтĕр, 2012 çулпа танлаштарсан, вулавăша çӳрекенсен шучĕ 5,7 пин çын таран чакнă. Сĕнтĕрвăрри, Етĕрне, Вăрнар, Шупашкар районĕсен кăтартăвĕсем уйрăмах япăх. Сăлтавĕ тĕрлĕ, çапах та вĕсенчен пĕри библиотека фондне çĕнетессипе çыхăннах ахăр. 2013 çулта вулавăшсем 1000 çын пуçне 129 çĕнĕ кĕнеке туяннă, 2012 çулта – 168. Тĕнче стандарчĕн норми – 250. Муниципалитет районĕсемпе хула округĕсенчен асăннă норматива пилĕк район кăна /Вăрнар, Красноармейски, Çĕмĕрле, Етĕрне, Елчĕк/ пурнăçланă. Тĕлĕнмелли акă мĕн: Шупашкар хулинче лару-тăру тата йывăр, кунта 1000 çын пуçне пурĕ те 29 экземпляр çеç туяннă.

Вадим Ефимов палăртнă тăрăх – 2014 çулта ку енĕпе тата та йывăртарах пулĕ, мĕншĕн тесен регионсенчи библиотека фончĕсене федераци бюджетĕнчен укçа уйăрма палăртман-мĕн. Республика та 539 вулавăш валли пурĕ те 2,3 млн тенкĕ çеç пама шантарнă. Пĕтĕм йывăрлăх вырăнти влаç çине тиенет. Тĕрĕссипе, федерацин 131-мĕш саккунĕпе – библиотекăсен фондне комплектлас тĕлĕшпе шăпах вăл яваплă та.

Музей ĕçĕнче те çивĕч ыйту сахал мар. Республикăри тăхăр музей реставраторсенчен пулăшу кĕтет. Çавăнпа пĕрлех музей коллекцийĕсене упраса хăварас тĕлĕшпе те çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕ Вадим Петрович. Аваллăх управçисене хăрушсăрлăх, сыхлав тытăмĕсемпе вăхăтра çыхăнтармаллине тепĕр хут аса илтерчĕ.

Çĕнĕлле – пултарулăха, пахалăха, пуçарулăха – тĕпе хурса ĕçлемеллине палăртрĕ министр. Укçа уйăрса парасса кĕтсе ларни хыçа юлтăр терĕ. Федерацин тĕллевлĕ программисен конкурсĕсене хутшăнма сĕнчĕ. Тĕслĕх вырăнне Чăваш патшалăх çамрăксен тата пукане театрĕсене асăнчĕ. Иртнĕ çул вĕсем çак майпа 2,5 млн тенке яхăн илнĕ. Кăçал вара "Раççей культури /2012-2020 çулсем/" тĕллевлĕ программăна хутшăнма ведомствăри 26 учрежденирен 17-шĕ, муниципалитета пăхăнакан 1422 учрежденирен пурĕ те 2 тата коммерципе ĕçлемен 2 общество организацийĕ çеç проектсем хатĕрленĕ.

Кадрсен ыйтăвĕ тавра та калаçу пулчĕ. Çамрăксем çителĕксĕрри куç умĕнчех. Кăçалхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне культурăпа кану учрежденийĕсенче ĕçлекенсен 9,3 проценчĕ çеç 30 çула çитмен, библиотекăсенче – 12,4 процент. Çамрăксем мĕншĕн суйласа илнĕ профессипе ĕçлесшĕн мар?

Пĕлтĕр Чăваш патшалăх культурăпа искусство институтĕнчен тата вăтам пĕлӳ паракан ятарлă виçĕ училищĕрен 181 специалист вĕренсе тухнă. Çакскерсенчен 95-шĕ культура учрежденийĕсене ĕçе вырнаçнă, 70-шĕ малалла вĕренме кайнă. 16-шĕн шăпи паллă мар. Патшалăх вара 2013 çулта пĕр студента музыка училищинче вĕрентме 227,4 пин тенкĕ тăкакланă, культура институтĕнче – 103,6 пин тенкĕ. Кам валли хатĕрленĕ? Пуç ватмалăх пур.

Иртнĕ çулта туса çитереймен ĕçсем пирки чарăнса тăни, кăлтăксене палăртни вĕсене кăçал пĕтерме пулăшасса шаннине пĕлтерчĕ Вадим Ефимов. 2014 çул Раççейре – Культура çулталăкĕ. Яваплăх тата та ӳсет, пурнăçа кĕртмелли тĕллевсем пысăкланаççĕ. "Культура çулталăкĕнче – çĕнĕ çитĕнӳсем!" – чĕнӳпе вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне министр.

■ **Надежда СМИРНОВА**

# Улатăрăн аталану малашлăхĕ пур

***Нарăсăн 28-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕçлĕ çул çӳревпе Улатăр хулинче пулнă.***



Михаил Васильевич 70 çул каялла туса лартнă ача сачĕ вырăнне 240 вырăнлăх садик строительстви /ăна 2013 çулта пуçланă/ мĕнле пынипе паллашнă. Хальхи вăхăтра графикпа килĕшӳллĕн пуçламăш тапхăрти ĕçсене пурнăçланă, çуртăн пĕрремĕш хутне вĕçлесе пыраççĕ. Ача садне 2014 çулхи юпа уйăхĕнче хута яма пăхнă. Ăна ĕçе кĕртнĕ май Улатăрсемшĕн ача сачĕсен черечĕн ыйтăвĕ туллин татăлать.

Ун хыççăн Михаил Игнатьев "Электроприбор завод" акционерсен обществинче пулнă. Предприятире авиаципе космос техники, электротехника оборудованийĕ серипе кăлараççĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕ производствăпа паллашнă. Предприяти ĕç-хĕлне вăл пысăк хак панă, заводра Раççейри предприятисем хаваспах туянакан продукци туса кăларнине палăртнă. "3 çул каялла эпир хамăрăн электротехника промышленноçĕн предприятийĕсене, микропроцессорсем, реле хӳтĕлевĕн пайĕсем туса кăларакансене пĕр чăмăра пĕрлешме сĕнсе питĕ тĕрĕс турăмăр. Пĕр ушкăна кĕрекен 30 яхăн предприяти рынокра хăйсен интересĕсене тивĕçлипех малти вырăна кăларса тăратать, çакă республика экономикишĕн те, Улатăр экономикишĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ", – тенĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ.

Михаил Игнатьев депутатсемпе тата хула активĕпе канашлу ирттернĕ. Вăл палăртнă тăрăх – çакнашкал канашлусене ĕç тăвакан влаç органĕсен ертӳçисем хутшăнни питех те усăллă, мĕншĕн тесен муниципалитет йĕркеленĕвĕсен депутачĕсем халăхпа хутшăнаççĕ, ăна мĕн хумхантарнине пĕлме майсем тупăнаççĕ. Михаил Игнатьев хула пĕрмаях аталаннине, халăх пурнăçĕнче нумай енĕпе ырă улшăнусем пулнине хавхаланса пĕлтернĕ.

"Улатăр Правительство шайĕнче чăн-чăн экзамен тытнă – çĕр-çĕр монохула хушшинче конкурсра çĕнтернĕ, 2010 çултан пуçласа общество инфратытăмĕн объекчĕсене аталантарма, территорие тирпейлеме кĕртме 1 млрд та 125 млн тенкĕ илнĕ", – тенĕ республика Пуçлăхĕ.

Улатăр хула администрацийĕн пуçлăхĕ Михаил Марискин доклад тунă. Кун йĕркине кĕртнĕ ыйтусене сӳтсе явма Чăваш Республикин юстици министрĕ Надежда Прокопьева, экономика аталанăвĕн министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Инна Антонова, Патшалăх Канашĕн депутачĕсем Николай Ефремовпа Юрий Кислов, Улатăрсем хăйсем хутшăннă, тĕрлĕ ыйту панă, хула влаçĕсен ĕçне лайăхлатмалли майсене сĕннĕ.

"Хамăрăн обязательствăсене пурнăçласа пырăпăр, кунта пурăнакансен кăмăл-туйăмĕ лайăхлантăр. Улатăрăн ырă улшăнăвĕсем куç кĕрет, аталану малашлăхĕ пур", – пĕтĕмлетнĕ Михаил Игнатьев.

Вăл ĕçре малта пыракансене наградăсем, пултарулăхра палăрнă çамрăксене стипендисем, çавăн пекех республикăри амăшĕн /çемье/ капиталне илме сертификатсем, кунта пурăнакансене çĕнĕ хваттер уççисем панă.

■ **А.ВАСИЛЬЕВА**

### 2014 çулхи пуш уйăхĕнче Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Чăваш Республикинчи йышăну пӳлĕмĕнче çынсене йышăнмалли график

| Орган ячĕ | Йышăну кунĕ | Йышăну вăхăчĕ |
|---|---|---|
| Чăваш Республикинчи патшалăх пурăнмалли çурт-йĕр инспекцийĕ | пуш, 6 | 15.00-17.00 |
| Федерацин патшалăх статистика службин Чăваш Республикинчи территори органĕ | пуш, 13 | 13.00-15.00 |
| Федерацин ветеринарипе фитосанитари службин Чăваш Республикинчи управленийĕ | пуш, 14 | 13.00-15.00 |
| Раççей Федерацийĕн МЧСĕн Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕ | пуш, 14 | 15.00-17.00 |
| Чăваш Республикинчи Шалти ĕçсен министерстви | пуш, 17 | 15.00-17.00 |
| Чăваш Республикин çар комиссариачĕ | пуш, 18 | 15.00-17.00 |
| Федерацин патшалăх регистраци, кадастр тата картографи службин Чăваш Республикинчи управленийĕ | пуш, 20 | 15.00-17.00 |
| Чăваш Республикинчи Шалти ĕçсен министерствин ÇÇХПИ управленийĕ | пуш, 21 | 13.00-15.00 |
| Раççей Федерацийĕн Ĕç тата социаллă хӳтлĕх министерствин "Чăваш Республикинчи – Чăваш Енри медицина-социаллă экспертизăн тĕп бюровĕ" хысна учрежденийĕ | пуш, 25 | 13.00-15.00 |
| Федерацин налук службин Чăваш Республикинчи управленийĕ | пуш, 27 | 15.00-17.00 |
| Федераци казначействин Чăваш Республикинчи управленийĕ | пуш, 28 | 13.00-15.00 |

Граждансене Шупашкар хулинче çак адреспа йышăнаççĕ: Ленинград урамĕ, 36-мĕш çурт.

Çак телефонпа шăнкăравласа малтанах çырăнмалла: /8352/ 62-22-33.

*Канашлу*

# Граждан обществисĕр малалла каяймăпăр

Федерацин Чăваш Республикинчи тĕп инспекторĕ Геннадий Федоров федерацин ĕç тăвакан влаçăн территори органĕсен ертӳçисемпе ирттернĕ координаци канашлăвĕнче граждан обществине йĕркелессин çивĕч ыйтăвĕсене хускатнă. "Объективлă тата субъективлă сăлтавсене пула асăннă процесс ахальлисен шутĕнчен маррине ăнланмалла. Халăхăн хăш-пĕр пайĕ граждан обществин институчĕсене йĕркелесси çине шанмасăр-ĕненмесĕртерех пăхать, – тенĕ канашлăва уçнă май тĕп инспектор. – Пирĕн çак сӳрĕк кăмăл-туйăма сирес тесе ытларах ĕçлемелле. Çынсен шухăш-кăмăлне пĕлме, вĕсен чунĕнче хастарлăх вăратма пире федерацин ĕç тăвакан влаçăн территори органĕсен общество канашĕсем, Этем, Ача прависене тата Предпринимательсен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăйсем пулăшĕç. Патшалăх влаç органĕсен ĕç-хĕлĕн уççăнлăхне аталантармалли концепцие Раççей Президенчĕн çу уйăхĕнчи "Патшалăх управленийĕн тытăмне çĕнетмелли тĕп çул-йĕр çинчен" Указĕнче тĕплĕн çырса кăтартнă. Унпа килĕшӳллĕн Интернетра влаç органĕсен ĕç-хĕлĕ çинчен тулли информаци илме пулать. Çавна май çынсем çитменлĕхсене асăрхама, патшалăх пулăшăвне парас ĕçе витĕм кӳме пултарĕç".

Координаци канашлăвĕнче граждан обществин институчĕсене Раççей Президенчĕн çу уйăхĕнчи "Раççей Федерацийĕнче пурăнакансене туянма май пур тата хăтлă çурт-йĕрпе тивĕçтерессипе тата коммуналлă пулăшăвăн пахалăхне ӳстересси çинчен" 600-мĕш Указĕнчи мероприятисене пурнăçа кĕртессине хастар хутшăнтарасси çинчен сăмах пынă. Аналитика çирĕплетнĕ тăрăх – республикăри общество организацийĕсем пурнăçа кĕртекен 64 социаллă проектран пĕри çеç çынсене пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшу парассипе çыхăннă. Раççей Президенчĕн федерцин Атăлçи округĕнчи полпречĕ Михаил Бабич пуçарăвĕпе йышăннă общество пĕлтерĕшлĕ проектсене мĕнле пурнăçланине те тишкернĕ. Çак проектсене пурнăçа кĕртме республикăн кăçалхи бюджетĕнчен укçа-тенкĕ çителĕклĕ уйăрнă.

■ **А.СТЕПНОВ**

*02 служба*

# Пӳрне йĕрĕсенчен пуçласа ĕлĕкхи "Маузер" таран

***Киллерсем килĕштерекен ТТ пистолет, "Вальтер", "Кольт", Югославире туса кăларнă "Зауер"... Ку вара – революци вăхăтĕнченех упранса юлнă "Маузер". Кусем – Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче фашистсен арсеналĕнче пулнă "Браунинг"сем", пĕрин çинче хăçан туса кăларнине палăртни те пур – 1936 çул... Вĕсене заводсенче серипе кăларнă, анчах юнашарах – вăрттăн ăсталанă хĕç-пăшал: пĕчĕк кăна, ал лаппи çине вырнаçакан илемлĕ револьверсем, нимĕçсен автоматне аса илтерекен икĕ пистолет-пулемет – пусаркăçĕсем /глушителĕсем/ те пур...***



### Илтĕм алла... "Браунинг"

Хĕç-пăшалăн пуян çак пуххипе хаçат корреспондентне ЧР Шалти ĕçсен министерствин экспертизăпа криминалистика центрĕнче паллаштарчĕç. Çак подразделени ертӳçи Александр Шешнев пуçлăх пуканне йышăниччен шăпах хĕç-пăшал енĕпе нумай çул ĕçленĕ, взрывотехника тата баллистика енĕпе кăткăс та хăрушă çĕр-çĕр экспертиза ирттернĕ. Çавна май перекен-сирпĕнекен хатĕрсем пирки нумай каласа пама пултарать. Çак "коллекцире" упранакан хĕç-пăшал – тĕрлĕ вăхăтра преступниксенчен туртса илнĕ, кунта экспертиза тунă револьверсемпе пистолетсем. Кашнине тенĕ пекех тытса пăхрăм – интереслĕ-çке! Александр Анатольевич палăртнă тăрăх – юлашки çулсенче хĕç-пăшала тĕпчеме панă тĕслĕхсем сайрарах. Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче, çĕршывра, çав шутра республикăра криминал иртĕхнĕ вăхăтра, чылай ытларах пулнă. Кунта упранакан хатĕрсен пысăк пайĕ – шăпах "шавлă" çав çулсен еткерĕ.

Кашни пистолетăн е револьверăн – хăйĕн историйĕ. Ак çак пистолет-пулеметсенех илер. Вĕсене вăрттăн ăсталанă. Малтан пĕрне туртса илнĕ. Ăна кам тата ăçта хатĕрленине палăртайманха. Вăхăт иртнĕ май тепри те йĕркелĕх хуралçисен аллине лекнĕ. Экспертиза малтан тата кайран туртса илнĕ икĕ пистолета пĕр çынах туса хатĕрленине палăртнă. Çакă вĕсене сутма ăсталанăскерĕн йĕрĕ çине ӳкме пулăшнă. Ун патĕнче ухтару ирттернĕ май хĕç-пăшал пайĕсене татах тупнă. Пур çав ăстасем: лайăх ĕçлекен, меллĕ пистолетсем... Çавнашкал çынсен пултарулăхне тӳрĕ çулпа ярасчĕ те...

Паллах, хĕç-пăшал экспертизи – ЭКЦ ĕçĕн пĕр енĕ кăна. Экспертизăпа криминалистика центрĕн тытăмĕнче аттестациленĕ 91 сотрудник ĕçлет. Пĕр пайĕ – районсенче, "филиалсем" Çĕрпӳре, Канашра, Çĕмĕрлере, ытти çĕрте пур. Пĕлтĕр подразделени эксперчĕсем 7,6 пин ытла экспертиза ирттернĕ. Вĕсен арсеналĕнче – экспертизăсен йăлана кĕнĕ 7 тата ятарлă 12 тĕсĕ. Пурин пирки те каласа пама хаçатăн ытла та пысăк лаптăкĕ кирлĕ пулĕччĕ. Çапах ĕçĕн хăшпĕр енĕпе паллаштарни вырăнлă.

### Наукăпа туслă экспертиза

Ĕлĕкхипе, калăпăр, преступлени пулнă вырăнти пӳрне йĕрĕсене илме графит çăнăхĕпе усă курнă вăхăтрипе, танлаштарсан паян ЭКЦ нумай мала кайнă. Техника революцийĕ кӳнĕ майсемпе специалистсем чăннипех анлăн усă кураççĕ. Тем тĕрлĕ приборпа комплекс та пур. Куçса çӳрекен икĕ криминалистика лабораторийĕ, взрывотехника лабораторийĕ, физикăпа хими тĕпчевĕн приборĕсем, газ хромотографĕсем, документсене тĕпчемелли видеоспектр компараторĕсем тата ыт.те. "Папилон М" комплекс мĕне тăрать! Чăматанра пӳрне йĕрĕсене илме, вĕсене танлаштарма, "хуçине" тупса палăртма кирли пĕтĕмпех пур.

Дмитрий Поздняков эксперт çак комплекса ĕçлеттерсе те кăтартрĕ. Пӳрнисене ятарлă вырăна тытрĕ те – вĕсен йĕрĕсем тӳрех экран çине тухрĕç. Тепĕр самант – экран çинче экспертăн хăйĕн сăнĕ, ячĕ-шывĕ те курăнса кайрĕç. Акă мĕнешкел хăвăртлăхпа ĕçлет "Папилон". Сăмах май интереслентĕмĕр: çыннăн пӳрне йĕрĕсем çулсем иртнĕ май улшăнаççĕ-и, преступник хăйне шыраса тупасран сыхланса вĕсене пĕтерме е улăштарма пултарать-и? Улшăнмаççĕ-мĕн – "пӳрнесене касса пăрахсан кăна..." Ахальтен мар ĕнтĕ çынна вĕлернĕ хăшпĕр тĕслĕхре преступниксем унăн аллине те çапса ватма тăрăшаççĕ – пӳрне йĕрĕсем ан юлччăр, вилнĕскер кам пулнине ан палăртайччăр... Юрĕ, пирĕн статья тĕрлĕ усал-тĕселшĕн вĕренӳ пособийĕ вырăнне ан пултăр – пĕтĕмпех çырар мар. Тепĕр тесен, йышăнаççĕ экспертсем, пӳрне йĕрĕ çиййĕнсе пĕтнĕ, çавна май ăна илме май çук тĕслĕхсем ахаль çынсемпе те пулаççĕ-мĕн. Сăмахран, вĕçĕмсĕр мĕн те пулин çăвакан хĕрарăмăн çухалать. Е – строительсен: пĕрмаях кирпĕчпе-растворпа ĕçле-ха – пӳрне çиййĕнет. Анчах вăхăт иртнĕ май пӳрне çинчи эреш пур пĕр каялла таврăнать-мĕн.

Тепĕр пӳлĕмре – цианакрилат камери. Тĕрĕссипе, вăл Следстви комитечĕн республикăри управленине килнĕ, анчах унпа çыхăннă ĕç ШĔМшĕн кăтартуллăрах та – шăпах кунта вырнаçтарнă. Ĕçре чăннипех пысăк пулăшу кӳрет-мĕн. Унăн вăрттăнлăхне те уçса пачĕç. Преступлени пулнă вырăнта пĕр-пĕр япала çинче преступникăн пӳрне йĕрĕсем юлнă тейĕпĕр. Анчах пахалăхĕ япăх – ахаль приборсемпе вĕсене йĕркеллĕ курма çук. Кун пек чух шăпах хайхи камера меллĕ. Сăмахран, пӳрне ӳкерчĕкĕ юлнă кĕленчене çак камерăна хураççĕ. Унта полимер хутăшĕллĕ пăс яраççĕ. Хайхи пӳрне йĕрĕ, тĕрĕссипе, çын аллинчен юлнă тарпа çу йĕрĕ. Ун çине полимер ларать, хытать, çирĕп, лайăх курăнакан ӳкерчĕк пулать – питĕ меллĕ.

Кӳршĕ пӳлĕмре Павел Яковлев эксперт ĕçлет. Вăл – пуç купташки тăрăх çыннăн пурăннă чухнехи сăнне тавăракан эксперт. Унашкал специалистсем Раççейре те сайра, республикăра вара – пĕртен пĕрре. Павел Германович та хăйĕн ĕç вăрттăнлăхĕсемпе тĕслĕхпе усă курса паллаштарчĕ. Тĕслĕхĕ вара – çыннăн пуç купташки. "Пăхăр, сăмса тĕлĕнчи шăмми сиенленнĕ – вăл çын чĕрĕ чухнех арканнă. Купташкан хыçал енче шăмă сиенленни вара кайран пулнă – виле ăшă трассин вĕри пăрăхне лексе выртнă та, шăмă çавăнпа тĕпреннĕ", – купташкана енчен енне çавăркаласа каласа парать эксперт. Çăвар тулли – кĕмĕл шăлсем, çакă та, паллах, вилле паллама пулăшать. П.Яковлев çын миçе çултине те, вăл хĕрарăм е арçын пулнине те палăртать. Купташка тытăмне кура çын сăнне ӳкерет. Малалли вара – техника ĕçĕ...

### 5 тенкĕ кăна – вăл та суя!

Укçа-тенкĕ чăнлăхне тĕрĕслекенсен те ĕç калăпăшĕ пысăк. Пай пуçлăхĕ Сергей Прокопьев 5 пин тенкĕлĕх икĕ купюрăна кăтартать. Пĕри – чăн укçа, тепри – суя, анчах вĕсене çиелтен пăхсан уйăраймăн та. Çавăнпа ятарлă приборсем пур. Суя укçа çапакансен ăсталăхĕ паян чăннипех пысăк: ультрафиолет хӳтлĕхне те, шыв паллисене те тума пултараççĕ. Акă мĕншĕн купюрăсене тĕпченĕ чух мĕн пур элемента сăнамалла.

Ахаль çыннăн вара суйине чăннинчен мĕнле уйăрмалла тет? Капла улталанасси те часах-çке. Экспертсен тивĕçлĕ сĕнӳсем пур. Суя укçана тытса пăхсах уйăрма пулать – чăнни пек кушăрка мар. Çутă çине тытса пăхсан уйрăмлăхсем пушшех курăмлă. Ултавçăсем купюра çинчи питех те вĕтĕ шрифтсене усăмлă тăвайманççĕ. Тепĕр самант: суя укçана хутлатсан унăн хуçлатнă вырăнти сăрри каять – принтерпа кăна пичетлеççĕ вĕт. Çакна та палăртмалла: хăш чухне чăнни те суя пек курăнать. Калăпăр, купюра тумтир кĕсйинче пулнă, ăна тумтирпе пĕрле çунă – кун пек чухне йĕркеллĕ банкнот та тĕссĕрленет, хăйĕн хăш-пĕр пахалăхне çухатать, унашкаллине ятарлă приборсем те суя укçа вырăнне йышăнма пултараççĕ.

Суя укçа тупнă тĕслĕхсем юлашки вăхăтра чылай. Асăрхаттараççĕ: енчен те унашкалли сирĕн алла лекрĕ тĕк – унпа усă курасси пирки ан шухăшлăр. Ку – преступлени. Тӳрех полиципе çыхăнмалла, çак купюра сирĕн алла мĕнле майпа е ăçтан лекнине аса илме тăрăшмалла. 1 пин тата 5 пин тенкĕлĕх суя купюрăсем ытларах тĕл пулаççĕ, эрнере темиçе купюра илсе килсе параççех. Çак кунсенче экспертсен аллине 100 долларлăх ют укçасем те лекнĕ – эппин, республикăра унашкаллисене саракансем те çук мар. Тен, çынсем суйине хăйсем пĕлмесĕрех ютран илсе килнĕ пуль – следстви пĕтĕмпех уçăмлатма тивĕç. Тĕлĕнмелле те, анчах суя вак укçа та пулать иккен. Унашкаллине хатĕрленин мĕн усси – калама хĕн. Тупăшĕ чăннипех пуслăх кăна-çке.

Апла-и, капла-и – экспертсем 5 тенкĕлĕх металл укçасен самай пысăк коллекцине пухма ĕлкĕрнĕ. Чăн та, вĕсем хальхисем мар, темиçе çул каялла çаврăнăшран туртса илнĕскерсем. Малтанхи тĕслĕхсене çемçе металран хатĕрленĕ-мĕн – тăхланран. С.Прокопьев вĕсене авсах кăтартрĕ. Чăннинчен уйăрма йывăр мар – сĕтел çине ӳкерсен сасси ян каймасть. Каярах тапхăрти тĕслĕхсем вара чылай пахарах. Вĕсене пăхăр хутăштарнă шăранчăкран тунă – çирĕпрех, сасси те чăн укçанни пекех. Анчах вĕсен те çитменлĕхĕ пур – укçа çаврашкин айккинчи йĕрĕсем çук, якалса кайнă пек.

Кунтах алкоголь изделийĕсен акциз маркисен чăнлăхне те тĕрĕслеççĕ. Саккунсăр эрех паян сутлăхра питĕ нумай, çавна май экспертсем те пушă лармаççĕ. Пĕр-пĕр кĕленчере "çутти", тен, йĕркеллех пуль, анчах акцизĕ – суяскер. Акциза пысăк укçа тӳлесе туянмалла-çке, вăт, перекетлес тĕллевпе хăшĕсем суя маркăсем çыпăçтараççĕ те. Тепĕр тесен эрехĕн хăйĕн пахалăхне те тĕрĕслеççĕ. А.Шешневăн ĕç пӳлĕмĕнчи шкап кантăкĕ хыçĕнче авă хаклă йышши "Хеннесси" коньяк кĕленчи ларать. Çак йĕркесен авторĕ унталла тинкернине /çук, апла-капла шухăшпа мар!/ асăрхарĕ пулас та – Александр Анатольевич кулса ячĕ: "Туспĕлĕш кĕрсен те çав кĕленчене тӳрех курать. "Мĕншĕн хăналамастăн?" – тесе ыйтакансем те пур. Вăл паха эрех мар çав – саккунсăрскер, экспертизăна илсе килсе панăскер. Ячĕ кăна – "Хеннесси", чăннипе вара – суррогат, таçта Кавказра вăрттăн-хĕрттĕн хатĕрлесе кунта сутлăха кăларнăскер. Çавăнпа та, каçарăр, хăналама пултараймастăп".

Хăналама вара, тĕрĕссипе, сăлтавĕ пурччĕ. 1919 çулхи нарăсра НКВД тытăмĕнчи Центррозыск çумĕнче пирвайхи наука-техника подразделенине – суд экспертизин пӳлĕмне – туса хунă. Тĕллевĕсем анлă пулнă: вырăнсенче наука экспертизине çул парасси, уголовлă шырав агенчĕсене преступленисене тĕпченĕ чух наука мелĕсемпе, дактилоскопипе усă курма, преступлени пулнă вырăна тĕпчеме вĕрентесси. Çапла вара экспертизăпа криминалистика служби çак кунсенче 95 çул тултарчĕ. Ăна криминал тĕнчипе кĕрешессин фрончĕн курăнман салтакĕсем /преступленисене уçса парас ĕçре эксперт-криминалистсен тӳпи чăннипех пысăк, анчах вĕсем яланах сцена хыçĕнче – курăнмаççĕ/ иртнĕ шăмат кун, пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнче, паллă турĕç. Уяв ячĕпе!

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

Хушма кăларăм



# Вĕрентӳ

Мал туртăмлисем

## Хăтлăх, тарăн пĕлӳ, çынлăх – пĕр тĕвĕре

***Карăклă вăтам шкулне пырса кĕнĕ май ача чухне вĕреннĕ сăвă аса килчĕ:"Ял вĕçĕнче, тӳремре капăр пысăк шкул ларать…" Шурă кирпĕчрен купаланăскер таçтанах курăнать. Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче хута кайнă пулин те тĕксĕмленмен-ха. Шурă пластик чӳречисем хальхи саманан варкăшĕ ку тăрăха тĕкĕнмесĕр хăварманнине палăртаççĕ. Кăшкарĕпе пĕрлех пĕлӳ çурчĕн ăш-чикĕ те çĕнелет. Акă апатланмăшра иртнĕ çуллахи каникул вăхăтĕнче кăна кӳрсе килнĕ сарă-хĕрлĕ сĕтел-пукан куçа йăмăхтарать. Кухньăра – апата пахалăхлă хатĕрлеме май паракан çĕнĕ йышши кăмака. Ирина Илларионовăпа Татьяна Кириллова поварсем кунта куллен апат тутлăлăхĕпе пĕрлех усăлăхĕ çинчен те манмасăр тăрмашаççĕ.***

Коридорта урай, стенасем çап-çутă – тирпейлĕхе çирĕп пăхăнса пурăнни тӳрех сисĕнет. "Унсăрăн епле-ха? Эпир шкулта каçченех, апла тăк ăна кил вырăннех хумалла. Хăтлă, таса çĕрте ĕçлеме те, вĕренме те аван", – шухăшне палăртать учреждени ертӳçи Валентина Михайлова. Сăмах май, директор тилхепине ăна шанса тыттарнăранпа çулталăк та иртмен-ха. Апла пулин те ĕçтешĕсем каланă тăрăх – ырă улшăну чылай. Валентина Георгиевнăн ертӳçĕ опычĕ пуррипе йĕрке тăвас пултарулăхĕ – чунра. Канаш район администрацийĕн социаллă ыйтусемпе тивĕçтерекен пайне 8 çул ертсе пынăскер ватти-вĕттипе те пĕр чĕлхе тупма пĕлет.

Эпĕ çитнĕ кун шкул ертӳçипе вĕренекенсен ушкăнĕ Юмансар ялĕнче пурăнакан 80 çултан иртнĕ Анна Тихоновна Михайлова патне çитме хатĕрленнĕччĕ. Унăн паттăр ывăлĕн – Владислав Михайлов афганецăн – ячĕпе хисепленет те асăннă шкул. Нарăс уйăхĕн 15-мĕшĕнче Афганистанран пирĕн çарсене илсе тухнăранпа 25 çул çитрĕ. Çакăн пек самантра ватă çыншăн, ывăлне ытла та ир çухатнăскершĕн, ырă сăмах каласа йăпатнинчен кăмăллăраххи мĕн пултăр?

### Лайăх çынсем çитĕнтерессишĕн

Кирек мĕнле шкулăн хăйĕн "виçĕ кичĕ" пур. Пĕри талантлă педагогсемпе çыхăннă. Карăклăсем тӳрех Маргарита Герасимова пирки сăмах пуçараççĕ. Чăн та, пысăк опытлă вĕрентекен пулнине унăн ĕнĕвĕсемех каласа параççĕ. Мари Эл патшалăх университетĕнчен истори, обществăпа право вĕрентекенĕн дипломне илнĕренпех, 1978 çултанпа, шкулта тăрăшать вăл. Хăйĕн предметне çав тери юратни ăна пĕлĕвне тарăнлатассишĕн тăтăш ăнтăлма хистет.



– Вĕрентекен ăслă пулни – лайăх, анчах чи кирли – ачана курма-туйма пĕлни. Вĕсене юратмасан, хисеплемесен педагог тăрăшнин хакĕ çук тесе шухăшлатăп. Паян çамрăк ăрăва пурнăç таппипе тан пыма хăнăхтармалла. Ашшĕ-амăшĕн çуначĕ айĕнчен тухсан çухалса ан кайччăр, йывăрлăхсене хăйсемех парăнтарма пултарччăр. Кашни ачан – хăйĕн ĕмĕчĕ. Ăна çывхартасси те вĕрентекенрен нумай килет. Çакнашкал пĕтĕмлетӳсем – манăн ĕçри шăнăр, – ăсталăхĕпе анчах мар, чунĕпе те пуяннине палăртаççĕ Маргарита Михайловна професси суйлас енĕпе йăнăшман. Çапах вĕрентекен пулас туртăмĕ хăçан пуçланнă-ши?





– Эпĕ Патăрьел районĕнчи Туçаран. Пире историпе обществăна РФ тава тивĕçлĕ учителĕ Мария Кудрявцева вĕрентетчĕ. Унăн урокĕсене çав тери юрататтăм, – вăрттăнлăха уçать ырă ят çĕнсе илнĕ М. Герасимова.

### "ХФС тытăмне лекесчĕ"

Иккĕмĕш "кит" пирки иккĕленӳсĕр "пуçаруллă ачасем" тенĕ пулăттăм. Канаш тăрăхĕнчи çак шкулта та йышлă вĕсем. Акă 11 класра пĕлӳ пухакан Алексей Васильева илер. Спортра хастарскерĕн дневникĕнче те "питĕ лайăх", "лайăх" паллăсем кăна çуталаççĕ. Кăçал Алешăшăн çав тери ăнăçлă çул – вăл Чăваш хайловнăн сăмахĕсем.

Çуллен унăн вĕренекенĕсем предмет олимпиадисен тĕрлĕ тапхăрĕнче çĕнтерӳçĕ ятне илеççĕ. Икĕ çул каялла РФ Президенчĕ çумĕнчи Право культурин академийĕ ирттернĕ ăмăртура Карăклăра вĕренекен Андрей Васильев малти вырăна тухнă. 2009 çултанпа республикăра общество пĕлĕвĕпе йĕркелекен олимпиадăра асăннă шкулта ăс пухакансем çĕнтерӳçĕсен йышне кашнинчех лекеççĕ. Паллах, çав çитĕнӳсемшĕн "айăпли" – М. Герасимова. Çакна та палăртар: общество пĕлĕвĕпе ППЭ тытакан шкулта çулсерен ӳссе пырать. Кунти кăтартусем республикăри вăтам балран яланах çӳллĕрех.

Иккĕленӳ çук: 36 çул каялла класа журнал тытса чăн-чăн учитель уттипе пырса кĕнĕ Маргарита Михайловна ...

Ен Пуçлăхĕн стипендине тивĕçрĕ. Вырăнти спортшкулта çăмăл атлетикăпа çине тăрса çывăхланни Ольга Безугловăн, йĕлтĕр спорчĕпе тĕнче класлă тренерăн, воспитанникне патшалăх енчен çапла хавхалантарма май панă. Эпир тĕл пулас умĕн кăна Алексей "Раççей йĕлтĕр йĕрне" хутшăнса хăйĕн тантăшĕсен хушшинче 2-мĕш вырăн йышăнса таврăннăччĕ.

– Çитĕнӳсем кĕттермеççĕ эппин, республика тулашне те тухса çӳретĕн-и? – тĕпчетĕп çамрăкпа калаçнă май.

– Çăмăл атлетика енĕпе федераци Атăлçи округĕн чемпионатне хутшăннăччĕ, – аса илет вăл.

Каччăн ашшĕ, Юрий Алексеевич, отставкăри прапорщик, хăйĕн тивĕçĕсене Канаш районĕн шалти ĕçсен пайĕнче пурнăçланă. Аслă ывăлĕшĕн те, çиччĕмĕш класра вĕренекен Александршăн та – тĕслĕх. Алексей вăрттăнлăха пытармасть:

– Шкул пĕтерсен çар енĕпех вĕренме каясчĕ. Атте çулĕпе утас шухăшлă эпĕ. Тен, ХФС тытăмне лекме май килĕ.

Умра вара – ППЭ тытмалли, ăна валли пусăрăнса хатĕрленмелли канăçсăр кунсем. Çавсавах чун киленĕçĕшĕн те пушă самант тупăнатех: черченипе кăсăкланакан Алеша машинăсемпе вĕсен двигателĕсене хут çине ӳкерме юратать. Пĕлсе пĕтер – тен, пурăна киле унран чаплă инженер пулĕ?

■ **Ирина ПУШКИНА.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем

"Çавра сĕтел"

## Пурăнмалли кĕтес, кивĕ доска, "сывă мар" ачасем...

***Республикăри вĕрентӳ тытăмĕнче юлашки çулсенче çамрăк специалистсем сахал пулни никамшăн та вăрттăнлăх мар. Шкулсенче вĕрентекенсен 3 процентне кăна йышăнаççĕ вĕсем. Çапах та çамрăк ăрăва пурнăçпа тан аталанма вăй питти, çаврăнăçуллă, шухăша хăвăртах ĕçе кĕртме пултаракан маттурсем кирли куç кĕрет.***

Вĕсене, мал курăмлă çамрăксене, шкула мĕнле илĕртмелле? Çакăн тупсăмне шыраса Чăваш Ен Пуçлăхĕ М. Игнатьев, вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕ В.Иванов И. Я. Яковлев ячĕллĕ ЧППИре "çавра сĕтеле" хутшăнни çинчен хаçатра пĕлтернĕччĕ.

Хальхи вăхăтра ялта çуралнă çамрăксем аслă пĕлӳ илнĕ хыççăн тăван тăрăха таврăнни сайра. Чылайăшĕн пĕр сăлтав: ĕç çук. Педуниверситетран вĕренсе тухма хатĕрленекен пулас историке Юрий Выросова вара тăван Патăрьел тăрăхĕнче хапăлласах кĕтеççĕ. Каччă тĕп хулари 10-мĕш шкулта малтанхи хăнăхусене илме тытăннă та ĕнтĕ.

– Яла ĕçлеме каякан тухтăрсене хавхалантармашкăн патшалăх ятарлă программа йышăнчĕ. Пĕр миллион тенкĕ – пурнăça йĕркелесе ямашкăн самай пысăк пулăшу. Ăна вĕрентекенсем тĕлĕшпе те çирĕплетме май çукши? – кăсăкланчĕ Юрий.

Михаил Игнатьев "Земство тухтăрĕ" районсенче сывлăх сыхлавĕнчи ларутăрăва лайăхлатма витĕмлĕ пулăшу кӳнине асăнчĕ-ха. Çапах та хăшĕ-пĕри алла лекнĕ укçапа хаклă çăмăл машина туяннине пĕлнĕрен пилĕк çул иртнĕ хыççăн хайхи хăюллă тухтăрсем хуланаллах талпăнассинчен сисчĕвленчĕ. Çакнашкал тепĕр программăна ĕçе кĕртмешкĕн республика бюджечĕ хальлĕхе хĕсĕкреххине те пĕлтерчĕ.

Патшалăх кӳрекен пулăшу тĕрлĕрен пулать. Акă Ирина Петрова, асăннă вĕренӳ заведенийĕнче шкулчченхи тата коррекци педагогикипе психологи факультечĕн юлашки курсĕн студенчĕ, хăйĕнпе Çĕрпӳ район администрацийĕ килĕшӳ ала пуснишĕн савăнать. Хĕр кăçал хута яма палăртакан садикре ĕçлеме пикенĕ, хальлĕхе вĕренекене муниципалитет уйăхсерен 2 пин тенкĕ стипенди тӳлет.

Шупашкарти 27-мĕш шкулта пуçламăш классене вĕрентекен Мария Родионова, икĕ çул каялла тулли правалла педагог пулса тăнăскер, вырăнти влаç ертӳлĕхне тав тумах килнĕ пулас: çамрăк учитель ĕç укçипе те, шкулти коллективпа та, пурăнмалли кĕтес туянма пултарнипе те /вĕрентекенсем илекен кредит ставкине патшалăх субсидиленĕрен кивçен укçана хăйĕн шалăвĕнчен тӳлет/ кăмăллă. "Ан манăр, туссем, çăмăл укça пурнăçра çук", – юлташла асăрхаттарчĕ карьера пусми çинче çирĕп тăраканскер.

Укçа тенĕрен, паян çамрăк специалистсем чăх пĕчĕккĕн сăхсах тăранать текен шухăшпа çураçса пурăнма килĕшмеççĕ. Елена Юркина тĕп хулари 10-мĕш шкулта физкультура вĕрентет. Педвузра тӳлесе пĕлӳ илекенĕн вĕренӳшĕн хăйĕнех парăма татас килет те – хальлĕхе шалăвĕ 6 пин тенкĕ ытларах кăна çав. Хавхалантару шайĕ пĕчĕккишĕн кулянать.

Вĕренӳ министрĕпе Чăваш Ен Пуçлăхĕ хĕре тивĕçлĕ квалификаци илнĕ хыççăн лару-тăру улшăнас шанчăк пурри пирки аса илтерчĕç, çула май тенĕ пек физкультура урокĕнчи справкăллă ачасен шучĕпе интересленчĕç.

– Класра 30 ача тăк вуннăшĕшĕн урок – ячĕшĕн кăна. Сывă пурнăç йĕрки пачах кăсăк мар унашкаллисемшĕн. "Сывă маррисен" шутĕнче çăмăллатнă ушкăнра чăннипех пулма тивĕçлисем сахаллине лайăх чухлатпăр, анчах...– чунне уçрĕ çамрăк физрук.

Оксана Ильина Шупашкар районĕнчи Çĕньял вăтам шкулĕнче ачасене акăлчан чĕлхине вĕрентет. Ăна учитель ĕçĕ питĕ килĕшет. Пăшăрхантаракани – шкулта информаци технологийĕ çителĕксĕрри. Чăваш Ен Пуçлăхне вăл хăй çыракан доскана кăтартма хатĕр. "Ун çинче пурăпа мĕн çырни те курăнмасть. Вырăнти ертӳçĕсен вара кун пирки пĕр сăмах – укçа çитсе пыманни", – хаш сывлать ачасемшĕн чунне пама хатĕрскер.

Чăн та, Оксанăн калаçăвĕ ăшра тăвăл çуратрĕ: чылай чухне пĕр-пĕр проекта /кунта – шкулсене ИКТ хатĕрсемпе, тĕрлĕ пурлăхпа пуянлатассине/ хута яратпăр та кăшт вăхăт иртсенех "пурнăçланă" тесе отчет пама васкатпăр. Кама улталатпăр? Хамăра, пуçлăхсене е суя ырри патне çитерменнине кашни утăмра пирĕнтен илтекен ачасене-и?.. Чăваш Ен ертӳçи вак-тĕвеке те манăçа кăларакан марччĕ те – çывăх вăхăтрах Çĕньялсен класс доскисем çĕнелессе, çĕр-шывĕпе чапа тухнă ентешĕмĕрĕн А.Г.Николаевăн ячĕпе хисепленекен 10-мĕш шкулта космонавт пекех спортпа туслă, сывă пурнăç йĕркине мала хуракан ачасем йышланасса шанас килет.

■ **Анна КУПРИЯНОВА**

## Çут çанталăка юратса

***Çут çанталăка юратни Шупашкарти 49-мĕш шкулта 2 класра ăс пухакан Аня Федоровăпа Настя Ананьевăна нарăс уйăхĕнче Çĕнĕ Шупашкарта регионсен хушшинче иртнĕ "Ăслăлăх. Пултарулăх. Аталану" /"Наука. Творчество. Развитие"/ XVII ăслăлăх конференцийĕнчи "Çут çанталăк /флора/" секцине хутшăнма май панă.***

Малтанах вĕсен "Чечеклен, тăван шкул!" ĕçĕ шкулта иртнĕ тупăшура çĕнтерсе "Чи лайăх проект" ята çĕнсе илнĕ. Хастарсем шкулта иртекен пур мероприятире те пуçаруллă. Вĕренӳре – малтисен ретĕнче. Уроксем хыççăн ачасен тата çамрăксен пултарулăхне аталантаракан центра "Колибри" студине спорт ташшисен ăсталăхне туптама çӳреççĕ хĕр пĕрчисем.

Хăйсен тĕпчев ĕçĕнче тăрăшуллăскерсем шкулти пахчана ашшĕ-амăшĕ пулăшнипе епле майпа илемлетме тата тирпейлеме пултарнине çутатса панă. Компьютерпа усă курса презентаци хатĕрлени, пурнăçланă ĕçе слайдсем урлă кăтартни те усăллă пулнă. Пĕрле тăрăшса шкул ачисем тĕрлĕ чечек лартнă. Вĕсене çу тăршшĕпех тирпейлесе, вăхăтра шăварса, çĕре кăпкалатса тăнă. Унсăр пуçне илемлĕ, хăйне евĕр клумбăсем ăсталаса асамат кĕперĕнни пек тĕрлĕ тĕспе сăрласа капăрлатнă. Пĕтĕм класс пĕр шухăшлăн хавхаланса ĕçленине пула шкул картишĕ самай хитреленни çамрăк тĕпчевçĕсен ĕçĕнче яр уççăн курăнать. Проект лартнă тĕллевсене сӳтсе явма, пурнăçланă ĕçе пĕтĕмлетме вĕрентни те курăмлă. Паллах, юратнă вĕрентекенĕ – М.В.Кузьмина ырă сĕнӳсем пани, йывăр самантра тĕрĕс канашпа пулăшни хĕр пĕрчисене тĕпчев ĕçне ăнăçлă хӳтĕлеме пулăшнă.



Çамрăк тĕпчевçĕсемпе пултаруллă шкул ачисем хăйсен проекчĕсемпе паллаштарма Чăваш Республикинчи тĕрлĕ хула-районтан кăна мар, Раççейри тĕрлĕ субъектран çитнĕ.

Конференцие хутшăнакансен ĕçĕсене И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ преподавателĕсем хакланă. Çĕнтерӳçĕсене диплом тата парнесем парса савăнтарнă. Малашне те тăван çут çанталăкпа çыхăннă ыйту тавра ĕçлеме ăнăçу суннă.

Мал ĕмĕтлĕ, яланах çĕнни патне ăнтăлакан-скерсем валли тĕрлĕ çул уçă, анчах чуна чи çывăххине суйласа илме пĕлмелле.

■ **Кристина АЛЕКСАНДРОВА**

Кун-çул

## Чăн-чăн гуманист

***Хусан кĕпĕрнинчи Шăхранта учительсен семинарине уçма ирĕк пани 1913 çулта Романовсен династийĕ 300 çул тултарнă ятпа çыхăннă. Хусан вĕрентӳ округне нарăс уйăхĕн 19-мĕшĕнче Питĕртен çапла хушу çитнĕ: «Шăхасан вулăсне кĕрекен Шăхран станцийĕнче 1914 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнче учительсен семинарине уçма ирĕк парас».***



2014 çулта вĕренӳ çак учрежденийĕ ĕçлеме пуçланăранпа 100 çул çитет. Мĕнле кăна паллă педагогсем ĕçлемен пулĕ кунта пĕр ĕмĕр хушшинче! Вĕсен йышĕнче – Канаш районĕнчи Сиккассинчи вăтам шкулта мана математикăпа вĕрентнĕ Виталий Данилович Гаврилов та. Вăл хăйĕн пурнăçне Канашри педколледж ĕçĕсемпе çыхăнтарнă. Тăхăр вунă çула çитнĕскер паян та студентсене воспитанипе пĕлӳ парас ĕçе хастар хутшăнать.

Виталий Гаврилов Куславкка районне кĕрекен Ырашпулăх ялĕнче 1924 çулта çуралнă. 1939 çулта Кунерти çичĕ çул вĕренмелли шкула «питĕ лайăх» паллăсемпе пĕтернĕ ачана Канашри педагогика училищине экзаменсăрах йышăнаççĕ. Анчах вĕренсе пĕтереймен вăл. Тата икĕ çултан вăрçă пуçлансан Виталин салтак тумĕ тăхăнса алла пăшал тытма тивет. Липецк хулине тата Украинăна нимĕçсенчен ирĕке кăларассишĕн пынă хаяр çапăçусенче Гаврилов ертсе пыракан автоматчиксен отделенийĕ пысăк паттăрлăх кăтартать. Одесса çывăхĕнчи çапăçусенчен пĕринче Виталий Гаврилов гварди сержанчĕн икĕ ури те йывăр аманать. Ултă уйăх çурă сипленет госпитальте сержант – фронта текех юрăхлă пулаймасть. 1946 çулхи çурла уйăхĕнче В.Гаврилов демобилизаци йĕркипе киле таврăнать.

22 çулти çамрăкăн вĕренес кăмăлĕ питĕ пысăк пулнă, анчах вăрçă хыççăн учительсем çитмен пирки ăна Куславкка районĕнчи Пучинке ялне пуçламăш шкула ертсе пыма яраççĕ. «Шкула çитрĕм те – икĕ алла шарт! çапрăм, – аса илет Виталий Гаврилов, – чӳрече кантăкĕсене кăларса кайнă, алăксем çук, парттăсем ванчăк. Ĕнерхи салтак çĕр çывăрмасăр çанă тавăрса ĕçлет, сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне мĕнле те пулин шкул çуртне юсаса пĕтерес тесе тăрăшать. Хăйĕн тĕллевне пурнăçлатех çамрăк учитель. Тепĕр çул шкул çуртне ял варрине куçараççĕ.

Çулталăк çурăран, хăйĕн вырăнне учитель тупсан кăна Виталий Данилович малалла вĕренме пултарать. 1948 çулта диплом илнĕ учителе Челябинск облаçĕнчи «Муравейник» совхозăн шкулне ĕçлеме яраççĕ. Кунта Виталий Данилович тĕлĕнмелле сăнавсем тăвать. Магнитогорск хулинче пурăнакан рабочисем хăтлă хваттерсенче е патшалăх туса панă коттеджсенче пурăнаççĕ. «Муравейник» совхозра вара ял çыннисем çĕр пӳртсенче асапланаççĕ. Мĕншĕн çавăн пек уйрăмлăх? Вăл вăхăтра пирĕн çĕршыва ертсе пымалли йĕркесенчен пĕри «пролетариат диктатури» пулнă. Влаç çĕр ĕçченĕсен пурнăçне лайăхлатас енĕпе çителĕклĕ ĕçлемен. Пурнăça тĕрлĕ енчен сăнаса Виталий Данилович çапла пĕтĕмлетӳ тунă: «Общество хутшăнăвĕнче чи паха енсенчен пĕри – гуманизм. Вăл пулмасан çын ĕçĕпе те, шухăшĕпе те тĕрĕс çултан пăрăнма пултарать».

1949 çулта В.Гаврилов Канашри учительсем хатĕрлекен института вĕренме кĕрет. Икĕ çултан математикăпа физика учителĕн дипломне илнĕ хыççăн ăна Канаш районĕнчи Карăклăри çичĕ çул вĕренмелли шкулта завучра ĕçлеме шанаççĕ. Виталий Данилович ачасен пĕлĕвне «начар» паллăсемпе хакламан. «Вĕсем шкул ачине, вĕсен ашшĕамăшне кӳрентереççĕ, кăмăлне хуçаççĕ. Ачасен пусăрăнчăк кăмăлпа вĕренмелле мар», – çакăн пек девиз пулнă унăн. Шкул ачин вĕреннĕ чухне чунĕ савăнмалла. Çакнашкал шухăшпа ĕçленĕ май Виталий Данилович математика вĕрентнĕ чухне усă курмалли вăйăсем çырать. Вĕсене учительсен пĕлĕвĕсене ӳстерекен институт 1966 çулта «Чăваш шкулĕсенче ĕçлекен учительсене пулăшма» кĕнекене кĕртет.

1953-1956 çулсенче Виталий Гаврилов Сиккассинчи вăтам шкулта вĕренӳ пайне ертсе пырать, 1956-1962 çулсенче Уçырма шкулĕнче директорта ĕçлет, кусăн мар майпа Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчен вĕренсе тухать.

Завучра ĕçленĕ чухне вăл вĕрентӳ ĕçĕнчи çĕнĕлĕхсене пĕтĕмлетет, вĕсене учительсен хушшинче сарать. Уçырмара вĕрентнĕ чухне хăй çĕнĕлĕхсем шырама пуçлать. Тĕслĕхрен, пĕр урамра пурăнакан ачасене пĕр класа пуçтарса вĕрентет – классене территорине кура йĕркелет. Пионерсен звенисемпе отрячĕсене те çак принциппах йĕркелеççĕ. РСФСР Педагогика академийĕ ку ĕçе пысăк хак парать – Виталий Даниловича Хисеп хучĕпе чыслать.

1962 çулта Виталий Гаврилов Канашри педагогика училищинче ĕçлеме пуçлать. «Хальхи вăхăтра учитель вулама-çырма вĕрентни кăна çителĕксĕр, унăн тата çынлăха çул пама вĕрентмелле», – çакăн пек тĕллевпе ĕçлет паян та Виталий Данилович Гаврилов Канашри педколледжра.

Урок ирттернисĕр пуçне вăл чылай ĕç çырать: «Хавшак сывлăхлă ачасене вĕрентесси», «Вăйă йăпатмăш мар, ачасене вĕрентмелли меслет», «Начар паллăсем лартмасăр вĕрентесси» тата ытти те.

Чăваш Республикинчи учительсен пĕлĕвне ӳстерекен институт Виталий Гаврилова Шупашкара чĕнсе илсе лекцисем вулаттарать, уйрăмах – 1970 çулсенче, çĕнĕ программăпа ĕçлеме куçнă вăхăтра.

Виталий Данилович общество ĕçĕсенче те хастар. 12 çул ĕнтĕ вăл педагогика колледжĕнчи ветерансен канашне ертсе пырать. Колледж 100 çул тултарнă май Виталий Даниловича татах та нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх сунатпăр.

■ **Василий ЛАПИН**

## Класра – музей

***Çĕнĕ Шупашкар шкулĕсенче вĕренекенсем ашшĕ-амăшĕ пулăшнипе XX ĕмĕре тавăрма май тупнă. Мĕнле тетĕр-и?***

Кунти 2-мĕш шкулти 3 А класра чĕрĕ истори кĕтесĕ йĕркеленĕ. "Пирĕн атте-анне çапла вĕреннĕ" ят панă экспозици валли ачасем тĕрлĕ хатĕр-хĕтĕр тупса килнĕ. Акă Ксюша Лаврентьева курава совет тапхăрĕнчи шкул формине тăратнă. Пионер галстукĕ, сăн ӳкерчĕксем, иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенчи дипломсемпе грамотăсем – мĕн кăна çук-ши кунта! Пĕрлехи вăйпа вĕренекенсем 60 ытла экспонат пухнă.

Класри музей кăçалхи кăрлач уйăхĕнче уçăлнă. Унăн экспозицийĕпе вара халĕ те интересленсех паллашаççĕ-ха. Экскурсие вĕренекенсем хăйсемех йĕркелеççĕ. Чăн-чăн музейри пекех кунта, куравçăсен шухăш-кăмăлне çырмалли кĕнеке те пур.

Çакнашкал хăйне евĕр кĕтес йĕркелессине пуçламăш классене вĕрентекен – 3 А-сен класс ертӳçи Ирина Вахирова пуçарнă. Кăсăклă экспозицине нарăс уйăхĕнче тăван шкула тĕл пулăва килнĕ выпускниксем те хаваспах паллашнă.

■ **Влада МИРСКАЯ**

**Кăларăма Ирина ИВАНОВА хатĕрленĕ.**

*Суд залĕнчен*

# Шикли шикленнĕ

***Тăвай районĕнче пурăнакан 37 çулти Николай Белков вырăнти предприятин ял хĕрринчи ангарĕнче кабель пуррине пĕлнĕ: йăкăр-тас!***

Каç еннелле металл касакан пăчкă илнĕ те ангар еннелле утнă. Чӳречен тимĕр решеткине каснă, шала кĕнĕ. 48 тата 60 метрлă кабель сыпăкĕсене куç хывнă. Пĕрне миххе чикнĕ, теприне хăйĕн тавра йăвалană. Тавралăх тĕттĕмленсен ангартан тухнă та пахчасем урлă йăпшăнса килнелле уттарнă. Вăрланă пурлăхăн йывăрăшĕ пур – темиçе хут канма та тивнĕ. Иртен-çӳрен курасран сыхланса пытаннă. Кабеле пӳртне илсе кĕмен, анкартинче улăм айне пытарнă.

Тепĕр кунне хуçи кабель çухалнине ирех асăрханă. Тӳрех Белков тĕлĕшпе иккĕленӳ çуралнă. Ун патне кайнă та – Николай килте мар иккен, Канаша тухса кайнă. Кăнтăрла хыççăн ун патне арăмĕ шăнкăравланă: кабель çухални пирки ăна шанманни çинчен пĕлтернĕ. Шикли шикленнĕ теççĕ вĕт: Белков полици хайхи кабеле ун патĕнче тупма пултарать тесе хăраса ӳкнĕ те – мăшăрне ăна хуçине тавăрса пама, унран каçару ыйтма сĕннĕ.

Анчах ку ăна уголовлă айăплавран çăлса хăварайман. Судра Белков айăпне йышăнса каçару ыйтнă. Сиене саплаштарнине кура суд ăна ирĕклĕхсĕр хăварман, 15 пин тенкĕлĕх штрафланă.

**Оксана ЯСТРЕБОВА,**
**Тăвай районĕн прокурорĕ**

# Ющенко приговорне пăрахăçланă

***Çĕнĕ Шупашкар хулин сучĕ иртнĕ çул вĕçĕнче «Новэк» управляющи компани директорĕ пулнă Андрей Ющенко тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе тишкерсе ăна айăплавăн темиçе статйипе тӳрре кăларнăччĕ. Химиксен хулин прокуратурине çак йышăну тивĕçтермен, вăл апелляци тăратнă май ЧР Аслă сучĕн уголовлă ĕçсене тишкерекен суд коллегийĕ приговора пăрахăçланă.***

Хула сучĕн приговорĕпе Ющенкăна коммерци организацийĕн ертӳçи полномочисемпе киревсĕр тĕллевпе усă курнă, укçа-тенке пысăк виçепе тăкакласа пĕтернĕ, служба вырăнĕпе усă курса укçа-тенке тăкакласа пĕтернĕ тесе айăплани тĕлĕшпе тӳрре кăларнă. УК 330 статйин 1-мĕш пайĕпе хăй тĕллĕн хăтланнăшăн айăпласа 50 пин тенкĕлĕх штрафланă.

Айăплав вара управляющи компани директорĕ пулнă вăхăтра вăл пурăнмалли çуртсене ăшăпа тивĕçтернĕшĕн пĕлсе тăрсах тӳлеменнипе çыхăннăччĕ. Çавна май ăшăпа тивĕçтерекен организаци умĕнчи парăм 150 млн тенкĕрен те иртнĕ те – УК пăхса тăракан çуртсене ăшă парас тĕлĕшпе хăрушлăх тухса тăнă. Çав вăхăтрах асăннă çуртсенче пурăнакансем управляющи компание коммуналлă тӳлевсене вăхăтра хывнă, çак укçа ресурспа тивĕçтерекен компани умĕнчи парăма татма çителĕклĕ пулнă, анчах укçана урăх тĕллевсем валли янă.

Ющенкăна хăй ертсе пыракан компани тытăмĕнчех икĕ юрист пуррине пăхмасăр айккинчи çынсемпе юридици пулăшăвĕ кӳме тăкаклă килĕшӳ тунăшăн айăпланă. Çавна май «ют» юристсене 8 млн тенкĕ ытла тӳленĕ. Унсăр пуçне хăйне шанса панă 15 млн ытла тенкĕлĕх пурлăха салатса пĕтернĕшĕн те айăплав тăратнă.

Хула сучĕ Ющенкăна тӳрре кăларнă май çак ĕçсенче граждана право тавлашăвне кăна курнă, вăл преступленисем тунине ĕнентерекен материалсем те çук-мĕн. Çĕнĕ Шупашкар прокуратури судăн çак пĕтĕмлетĕвĕпе килĕшмен, Ющенкăна сăлтавсăр тӳрре кăларнă тесе çăхав çырнă. ЧР Аслă сучĕ прокуратурăн çак позицийĕпе килĕшсе тӳрре кăларакан приговора пăрахăçланă, уголовлă ĕçе суда тепĕр хут тишкерме панă. Приговорăн экс-директора айăплакан пайне улăштармасăр хăварнă.

**Н.ДМИТРИЕВ**

*Яваплăх*

# Арестленине сутма юрамасть

***Республикăри потребительсен ял хуçалăх кооперативĕсенчен пĕрин председателĕ А. банкран 500 пин тенкĕ кредит илнĕ. Анчах ăна тавăрса парас тĕлĕшпе хăйĕн тивĕçне пурнăçлайман…***

Çавна май Федерацин суд приставĕсен служби Улатăрти пайĕн приставĕ район сучĕн йышăнăвне тĕпе хурса хайхискерĕн «Хендай» автомобильне арестленĕ. Яваплă управçă пулма парăмлă хуçине хăйнех палăртнă. Паллах, шанса панă çак пурлăха сутма, пытарма, урăх çынна пама юраманни пирки çирĕп асăрхаттарнă. А. вара çакна хăлхана чикмен. Арестленĕ пурлăха арăмĕ пулнăскерĕн Мордовире пурăнакан аппăшне сутса янă. Чăн та, ку ячĕшĕн кăна пулнă темелле – транспорт хатĕрĕпе арçын ним пулман пекех хăй усă курнă.

Анчах кăштахран çĕнĕ хуçа та машинăна сутма шут тытнă. Çавна май автомобиль хут çинче тата тепĕр çын аллине куçнă. Апла пулин те кооператив ертӳçи «кустăрмаллă урхамахпа» хăех усă курнă. Истори çакăнпа кăна та вĕçленмест-ха – кăштахран машинăна каллех тепĕр çынна сутнă.

Çапла вара А. Уголовлă кодексăн 312 статйин 1-мĕш пайĕпе пăхнă преступлени тунă. Приставсем, паллах, автомобиле шыраса тупнă, вăл халь кооператив ертӳçин айăпне ĕнентермелли объект пулса тăнă. Арçын тĕлĕшпе вара асăннă статьяпа уголовлă ĕç пуçарнă. Палăртса хăварни вырăнлă: çак преступленишĕн айăплине çирĕп яваплăх кĕтет: 80 пин тенкĕ таран е айăпланакан 6 уйăхри ĕç укçи е урăх тупăшĕ чухлĕ штраф. Çавăн пекех 480 сехет таран обязательнăй йĕркепе е икĕ çул таран ирĕксĕрлесе ĕçлеттерме, е ултă уйăх таран арестлеме, е икĕ çул таран ирĕклĕхсĕр хăварма пултараççĕ.

**К.АНТИПОВ**

# Ку çĕр автоюсав валли мар

***Шупашкарти Мускав районĕн прокуратури тĕрĕслев иртнернĕ май «Юрма» агрохолдинг çĕр лаптăкĕпе тивĕçлĕ тĕллевпе усă курманнине тупса палăртнă.***

Сăмах Шупашкарти К.Иванов урамĕ, 94 адреспа вырнаçнă лаптăк пирки. Хăй вăхăтĕнче кунта сăра завочĕ пулнă, халь вара унăн çурчĕсенче автомойка, юсав мастерскойĕсем, шиномонтаж вырнаçнă. Тивĕçлĕ правилăсемпе килĕшӳллĕн асăннă лаптăк «О-7» зонăна кĕрет – халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерекен тата производство ĕç-хĕлĕн объекчĕсен зони. Унта автосервис объекчĕсене вырнаçтармашкăн ятарлă ирĕк илмелле. «Юрман» çак лаптăк тĕлĕшпе унашкал ирĕк çук.

Район прокуратури агрохолдинг йĕркене пăснине кура унăн ертӳçи тĕлĕшпе адмĕç пуçарнă, Владимир Ермолаева административлă майпа айăпласа 3 пин тенкĕлĕх штрафланă.

**Н.СТЕПАНОВ.**

# Тӳресем ăмăртаççĕ

***Патшалăх тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче вăй хуракансен хушшинче çулленех спартакиада иртет. Тӳресем волейбол, футбол, шашка-шахмат, дартс турнирĕсенче, ишес, сĕтелçи теннисла выляс, вĕрен туртас тата ытти ăмăртура вăй виçеççĕ.***



Кăçал республикăри патшалăх тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕçченĕсен XIII спартакиади нарăсăн 20-мĕшĕнче старт илнĕ. Пĕрремĕш турнирта вĕсем пăшалтан перессипе тупăшнă. Унта Чăваш Ен Пуçлăхĕн Администрацийĕн, Шалти ĕçсен министерствин, ЧР Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин, Чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн, федерацин айăплава пурнăçлакан тата налук службисен республикăри управленийĕсен командисем мала тухнă.

Çак кунсенче вĕсем йĕлтĕр çине тăнă, ăмăрту Кӳкеçре иртнĕ. Спортсменсене ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертӳçи Александр Иванов саламланă, ăнăçу суннă. Эстафетăна 56 команда хутшăннă. Патшалăх влаç органĕсен командисен тупăшăвĕнче ЧР Ял хуçалăх министерствин йĕлтĕрçисем çĕнтернĕ. ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн тата ЧР Патшалăх Канашĕн ĕçченĕсем иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене йышăннă. Федерацин влаç органĕсен территори управленийĕсен командисен хушшинче Шалти ĕçсен министерствин сотрудникĕсем пуринчен хастартарах пулнă, вĕсем хыççăн финиша федерацин айăплава пурнăçлакан тата налук службисен республикăри управленийĕсен йĕлтĕрçисем тухнă. Район-хула администрацийĕсен ĕçченĕсем те уйрăммăн ăмăртнă. Ку ушкăнра Çĕрпӳ, Шупашкар тата Канаш районĕсенчи командăсене çитекенни пулман.

# Сăрт çинче – хăюллисемпе хастаррисем



***Юлашки çулсенче пирĕн республикăра фристайлпа кăсăкланакан йышланчĕ. Сикме-çаврăнма хăраман çамрăксем «ски-кросс тата слоуп-стайл» дисциплинăсене уйрăмах килĕштереççĕ, кашни кун ăсталăха туптаса тĕрлĕ ăмăртура палăраççĕ.***

Шупашкарти «Вертикаль» центрта иртнĕ чемпионат та хăюллисемпе хастаррисене пухрĕ. Фристайлçăсен тупăшăвне республикăри 40 яхăн йĕлтĕрçĕ хутшăнчĕ. Пĕрремĕш кун спортсменсем ски-кросс енĕпе вăй виçрĕç. Малти вырăна 2013 çулхи чемпион Александр Смирнов тата Раççей шкул ачисен спартакиадин призерĕ Максим Яковлев тивĕçрĕç. Яшсен ушкăнĕнче пьедестал çине Роман Марквальд, Илья Малов тата Артем Горбунов хăпарчĕç. Хĕрсем те каччăсенчен кая мар: ăмăртура Лана Прусаковăна, Екатерина Мулендеевăна, Надежда Сабуровăна çитекенни пулмарĕ.

Чемпионатăн иккĕмĕш кунĕнче Шупашкарти Олимп резервĕсен 2-мĕш спорт шкулĕн вĕренекенĕсем пĕрремĕш хут слоуп-стайл ăмăртăвĕнче тупăшрĕç. Çак дисциплинăра Никита Васильев çĕнтерчĕ. Дмитрий Мулендеевпа Михаил Михайлов иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене йышăнчĕç. Яшсен турнирĕнче Роман Егоров, Илья Малов тата Кирилл Светопольский палăрчĕç. Пикесен кăтартăвĕсем çапларах: Лана Прусакова «ылтăн», Екатерина Мулендеева «кĕмĕл» çĕнсе илчĕç.

Чăваш Республикин пĕрлештернĕ командин аслă тренерĕ Валерий Васильев каланă тăрăх – фристайлçăсен ăсталăхĕ çултан çул ӳсет, тен, малашне вĕсен йышĕнче Олимп вăййисене хутшăнакансем те пулчĕç. «Елена Муратовăран тĕслĕх илсе могулпа интересленекенсем те пур. Вĕсене вĕрентмешкĕн спорт объекчĕ çукки кăна чăрмантарать. Фристайлăн тепĕр тĕсне – хаф-пайпа – аталантарма та услови кирлĕ», – терĕ тренер.

**Пĕлме**

**Могул** /юр тĕмеске, мăкăр/ – фристайл тĕсĕ. Ку чухне спортсменăн лакăм-тĕкĕмлĕ трассăпа анмалла, трамплин çинчен икĕ хут сикмелле.

**Ски-кросс** – йĕлтĕрçĕсен кросĕ. Темиçе спортсменăн сăртлă трассăран анмалла, финиша малтан çитекенни çĕнтерет.

**Слоуп-стайл** /акăлчан сăмахĕ: slope – тăвайкки, style – стиль/. Ятарлă трассăпа анакан спортсменăн сикнĕ чух тĕрлĕ трюк тумалла.

**Хаф-пайп** /акăлчан сăмахĕ, çурма пăрăх тенине пĕлтерет/. Пĕкĕ евĕрлĕ конструкци ăшĕнче йĕлтĕрçĕн стена тăрăх ярăнса хăпарнă чухне тĕрлĕ трюк тумалла.

## Киокусинкай

Чăваш Ен спортсменĕсем Чул хула облаçĕнчи Дзержинск хулинче иртнĕ федерацин Атăлçи округĕн чемпионатĕнчен медальсемпе таврăннă. Пирĕн ентешсенчен йăлана кĕнĕ ăмăртура 7 каратист тупăшнă, вĕсенчен виççĕшĕ финала тухнă. «Сэнсей» спорт клубĕнче ăсталăха туптакан Оксана Петрова, 16-ри Антон Ефимов, «Такуан» клуба çӳрекен Егор Пантелеев хăйсен виçисенче «кĕмĕл» çĕнсе илнĕ.

## Гимнастика

Мускав облаçĕнчи Озеры хулинче Пĕтĕм Раççейри «Мускав шанăçĕсем» турнир иртнĕ. Ăмăртăва пысăк çитĕнӳсемпе палăрнă спортсменсем те, пĕрремĕш утăмсем тăвакан хĕр ачасем те хутшăннă. Унта ЧР гимнастика федерацийĕн пикисем те палăрнă: пĕр тăван Шоркинсем /тренерĕ – Ирина Штайнер/. Анна пĕрремĕш разрядлă гимнастсăсен йышĕнче иккĕмĕш вырăн йышăннă, унăн йăмăкĕ Екатерина – пиллĕкмĕш.

**Андрей МИХАЙЛОВ**

*Шăпа*

# Ĕмĕр ирттересси – уй урлă каçасси мар

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Ишеккассинче пурăнакан Лидия Яковлевна Перевалкина çак кунсенче 90 çул тултарчĕ. Хура-шур сахал мар курнă тыл ветеранĕ çамрăклăхне лайăх ас тăвать. Мăшăрĕпе Николай Павловичпа иккĕшĕ виçĕ ача çуратса ӳстернĕ. Ялта ятлă, хисеплĕ çемье паян та килĕштерсе шăкăл-шăкăл пурăнать. «Хĕрарăм – пурнăç тыткăчи», – теççĕ. Çакна Лидия Яковлевнăпа тĕл пулнă май тепĕр хут ăша хыврăм. Тăванĕсем палăртнă тăрăх – çамрăк чухне Лидия хитре сăн-питлĕ, сăпайлă та ĕçчен хĕр пулнă. Куçĕсенчи ăшă хĕлхемĕ халĕ те упранса юлнă.

Лидия Яковлевна Тракушкăнь ялĕнче çуралса ӳснĕ. Çемьере вĕсем çиччĕн пулнă. Пурте пĕчĕклех ĕçе кӳлĕннĕ. Ашшĕпе амăшĕ ачисене вĕрентме тăрăшнă. Лида та 7 класс пĕтернĕ. Аслă пиччĕшĕ нумай вĕреннĕ çын пулнине те ас тăвать ветеран. Вăл чылай çул судьяра ĕçленĕ иккен. Аппăшĕ ветеринара вĕреннĕ. Ыттисем те хăйсем кăмăллакан профессисене суйланă. Пурнăçран уйрăлнă ĕнтĕ вĕсем, анчах Лидия Яковлевна çывăх çыннисене час-часах аса илет. Элĕк районĕнчи Тури Вылă ялне качча кайнă аппăшĕн туйне паянхи пек ас тăвать. Унăн мăшăрĕ Александр Артемьевăн пиччĕшĕ пулнă иккен. Туя çын нумай килнĕрен амăшĕ вĕсене мĕнле пăхса ярассинчен шикленнине те манман.

Унăн çамрăклăхĕ те хаяр вăрçă çулĕсенче иртнĕ. Ял халăхĕпе пĕрле куннеçĕрне пĕлмесĕр тăван колхозра тăрăшнă. Кайран та пĕр кун та ĕççĕр ларман. Вăрçă хыççăн хĕллехи кунсенче пайтах сӳс арланă. Вăл тапхăрта çамрăк хĕрсем тăван-хурăнташĕ патне кӳршĕ ялсене те ларма çӳренĕ. Лида Тури Вылă ялне те кайнă. Хурăнташĕсем патĕнче, Кашинсен кил-çуртĕнче те пулнă. Пĕррехинче вĕсем патне ларма кайсан пулас мăшăрĕ Николай Перевалкин çывăх çыннисемпе çураçма пынă. Анчах сăпайлă хĕр яхăнне те яман: «Манăн тăван кил пур, анне пилĕсĕр ниçта та каймастăп», – тенĕ. Евчĕсем тупса панă хĕр Ишеккасси каччине питĕ кăмăла кайнă. Тĕрĕссипе, каччă унран 9 çул кĕçĕн пулнă. Каçхине Лида киле килсен Перевалкинсем хыççăнах çитнĕ. Вĕсем ку хĕре вĕçертес темен иккен. Çав каçах хĕре çураçса Ишеккассине илсе килнĕ. Анчах çамрăк мăшăрăн телейĕ нумая пыман, упăшкине 19 çул тултарсан çара илсе кайнă. «Çĕнĕ çын» ун чухне çирĕм саккăрта пулнă. Виçĕ çул хунямăшĕпе кинĕ Николай Павлович таврăнасса кĕтнĕ. Виçĕ çултан салтак тăван килне çаврăнса çитнĕ. Çын патĕнче пурăнма çăмăлах пулман пулин те Лидия Яковлевна чăтнă, кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлесе вăхăта иртнернĕ. «Вăрмантан çунашкапа мĕн чухлĕ вутă туртман-ши?» – аса илет ветеран. Лашапа та пайтах çӳренĕ вăл. Вăхăт иртнĕ май виçĕ ача çуралнă. Килĕшӳллĕ çемьере икĕ ывăлпа хĕр ӳснĕ. Перевалкинсем 1962 çулта кирпĕчрен çурт лартаççĕ. Николай Павловичăн аллисем ылтăн пулнă. Вăлах – ăста платник те, электросварщик ĕçне те пултарнă. Колхозра та ĕçленĕ, кӳршĕ-аршăна та пулăшнă.

Лидия Яковлевна 14 çул колхозра дояркăра вăй хунă. «Кивĕ фермăра ĕçленĕ çулсенче уйрăмах йывăрччĕ. Каçхине хĕрĕх литр кĕрекен бидонсене сĕт тултарса алă вĕççĕн çырмари çăл куçри сивĕ шыва кайса лартаттăмăр. Унсăрăн çу кунĕсенче сĕт йӳçĕхет. Аслă ывăлăм Шуркка пĕчĕклех мана пулăшма пыратчĕ. Тислĕк хыратчĕ, ĕнесене апат пама пулăшатчĕ. Каярах çĕнĕ фермăна куçсан çăмăлрахчĕ», – аса илет иртнине Лидия Яковлевна. Кирек мĕнле ĕçе те пысăк яваплăхпа пурнăçлама хăнăхнă. Тăрăшуллă, маттур доярка колхозра кăна мар, районта та малтисен ретĕнче пулнă. Ĕçне кура – хисепĕ, чысĕ. Ĕçри хастарлăхшăн вăл пĕрре кăна мар наградăсене тивĕçнĕ. Ун медальпе Мухтав хучĕ те сахал мар. Сăпайлăскер вĕсемпе мăнаçланма юратмасть.

Перевалкинсем килти хушма хуçалăхра та выльăх-чĕрлĕх нумай усранă. Лидия Яковлевна тивĕçлĕ канăва тухсан те тырă кирлĕ тесе Чул хула облаçне ĕçлеме кайнă. Çур акинче сеялщикра ĕçленĕ. Ĕмĕрне ĕçпе иртернĕ хĕрарăм халĕ урисем ыратнипе аптăрать. Пӳртре туяпа кăна утать пулин те нăйкăшмасть, мăшăрĕпе кĕçĕн ывăлне апат пĕçерсе çитерме мехел çитерет. Ялта пурăнакан ывăлĕпе кинĕ, Шупашкарти хĕрĕпе кĕрӳшĕ те час-часах килеççĕ, пулăшма тăрăшаççĕ. Çуртра тирпей-илем, хăтлăх хуçаланать. Кил хуçисем çурта ачисем пулăшнипе çĕнетсех тăраççĕ.

Юбиляра Хĕрлĕ Чутай район администрацийĕн пуçлăхĕ Александр Башкиров, Хĕрлĕ Чутай ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Леонид Аргандейкин саламларĕç, Раççей Президенчĕн саламĕпе чысларĕç.

**Юлия МАРЕЕВА.**
Хĕрлĕ Чутай районĕ

# Чăвашлăх уявĕпе – Культура çултаlăкне

***Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуçри культура çуртĕнче «Йăлтах культурăран пуçланать» пысăк концерт иртнĕ. Ăна Культура çулталăкне халалланă.***

Пухăннисене Аслă Арапуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Владимир Секретов саламланă, халăхăмăрăн йăли-йĕркине, культурине çине тăрсах упрамалли пирки каланă.

Чăвашлăх уявне культура ĕçченĕсен хорĕ уçнă. Унтан «Шуçăм» ача сачĕ тата ачасен «Çăлкуç» фольклор ушкăнĕ сăмах илнĕ. Куракансем вырăнти участок больницин пултарулăх ушкăнне тăвăллăн алă çупса кĕтсе илнĕ. Асăннă ял тăрăхĕнчи Валерий Фроловпа Владимир Верликов ертсе пыракан «Шуçăмпа» «Çăлкуç» ансамбльсем çĕнĕ юрă-ташăпа паллаштарнă. Аслă Арапуçсем Культура çулталăкне халалласа клуб фойинче вĕтĕ шăрçаран ăсталанă капăрчăксен «Чун уççи» куравне йĕркеленĕ. «Хамăр наци культурине упрамалла, хакламалла тата пуласлăха çитермелле», – пĕтĕмлетнĕ юлашкинчен культура çурчĕн директорĕ Розалия Ефимова.

**Р.АНАТОЛЬЕВА.**

# Олимп çулăмĕпе сыв пуллашнă

***Сочире икĕ эрне ытла кĕрленĕ Пĕтĕм тĕнчери хĕллехи Олимп вăййисем шăпланчĕç. Пысăк çак пулăма халалланă республикăри «Олимпиадăпа çывăхлан» акци те вĕçленчĕ.***

Юлашки тĕл пулу – сыв пуллашу каçĕ – Шупашкарти «Юмах» садикре иртнĕ. Шăпăрлансем патне уява ЧР фитнес-аэробика федерацийĕн ертӳçи Оксана Вербина пынă. 2013 çулхи раштавăн 27-мĕшĕнче Шупашкарта иртнĕ Олимп çулăмĕн эстафетине хутшăннăскер вĕсене факелпа паллаштарнă, пĕчĕк чухнех спортпа туслă пулни çинчен каласа панă. Спортсменка ачасене парнесемпе те хавхалантарнă, фитнес-аэробика хусканăвĕсене тума вĕрентнĕ. Садикри çамрăк артистсем те хăнана хăйсен пултарулăхĕпе тĕлĕнтернĕ, юлашкинчен пурте зарядкăна тăнă.

**О.МАСЛОВ.**

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерӳ
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

*Саламлатпăр*



***Хаклă та юратнă кумана – Вăрмар районĕнчи Ямпай ялĕнче пурăнакан Альбина Васильевна АНТОНОВĂНА – сумлă юбилейпе чун-чĕререн саламлатпăр. Кил ăшшине упраса пурăнма çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм ĕмĕр, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хăват, иксĕлми хастарлăх сунатпăр.***

***Хисеплесе Лукинсен çемйи.***

Администрация Кошноруйского сельского поселения Канашского района Чувашской Республики информирует население о предстоящем предоставлении следующих земельных участков:

1. Земельный участок площадью 4338400 кв.м. с кадастровым номером 21:11:000000:3010, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Канашский район, сельское поселение Кошноруйское (поле 3 полевого севооборота (рабочий участок №1, №2, №3), поле 1 полевого севооборота (рабочий участок №1), поле 4 полевого севооборота, поле 4 кормового севооборота), граница земельного участка состоит из 7 контуров, категория земель - земли сельскохозяйственного назначения.

2. Земельный участок площадью 1181500 кв.м. с кадастровым номером 21:11:050101:70, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Канашский район, сельское поселение Кошноруйское (поле №3 полевого севооборота, рабочий участок №1), категория земель - земли сельскохозяйственного назначения

3. Земельный участок площадью 917400 кв.м. с кадастровым номером 21:11:050101:71, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Канашский район, сельское поселение Кошноруйское, поле №4 (рабочий участок №3) , поле №5 (рабочий участок №5), граница земельного участка состоит из 2 контуров, категория земель - земли сельскохозяйственного назначения.

4. Земельный участок площадью 715788 кв.м. с кадастровым номером 21:11:050101:36, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Канашский район, земельный участок находится примерно в 227 м по направлению на восток от дома №3 по ул. Кольцова в д. Дальние Сормы, поле №4 первого севооборота (участок №1) СХПК "Правда", категория земель - земли сельскохозяйственного назначения

5. Земельный участок площадью 606309 кв.м. с кадастровым номером 21:11:050302:81, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Канашский район, земельный участок находится в 1680 м по направлению на северо-запад от д. 1 по ул. Советская в д. Кошноруй, категория земель - земли сельскохозяйственного назначения.

6. Земельный участок площадью 409964 кв.м. с кадастровым номером 21:11:0:465, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Канашский район, земельный участок находится в 100 м по направлению на запад от д.1 по ул. 50 лет Октября в д. Ближние Сормы, категория земель - земли сельскохозяйственного назначения.

7. Земельный участок площадью 316762 кв.м. с кадастровым номером 21:11:0:448, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Канашский район, земельный участок находится в 350 м по направлению на восток от д. 19 по ул. Кооперативная в д. Ближние Сормы, категория земель - земли сельскохозяйственного назначения.

Разрешенное использование - для сельскохозяйственного производства. Срок аренды - 20 лет.

Желающим приобрести вышеуказанные земельные участки обращаться с заявлением в администрацию Кошноруйского сельского поселения Канашского района Чувашской Республики по адресу: Чувашская Республика - Чувашия, Канашский район, д. Кошноруй, ул. Ленина, д.35, в течение 30 дней со дня опубликования, тел. 8 (83533) 67-4-43.

**Информация об итогах аукциона по продаже права на заключение договоров аренды земельных участков**

Министерством имущественных и земельных отношений Чувашской Республики 25 февраля 2014 года в соответствии с распоряжениемот 10.01.2014 № 3-р проведен аукцион, открытый по составу участников и по форме подачи предложений о цене права на заключение договоров аренды земельных участков, находящихся в государственной собственности Чувашской Республики и расположенных на территории индустриального парка города Чебоксары.

По лоту 1 (право на заключение договора аренды земельного участка общей площадью 7 075 кв.м с кадастровым номером 21:01:030312:2624, расположенного по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, проспект Тракторостроителей) аукцион признан несостоявшимся в связи с отказом победителя аукциона от подписания протокола об итогах аукциона.

По лоту 2 (право на заключение договора аренды земельного участка общей площадью 9 000 кв.м с кадастровым номером 21:01:030312:2626, расположенного по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, проспект Тракторостроителей) победителем аукциона признано ЗАО "Промэнерго".

По лоту 3 (право на заключение договора аренды земельного участка общей площадью 4 580 кв.м с кадастровым номером 21:01:030312:2630, расположенного по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, проспект Тракторостроителей) победителем аукциона признано ООО "ИМЗ "Евростар".

## ПРОДАЮ

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, **металлосайдинг.** Доставка. Т. 444433.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**75. Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

## РАБОТА

**27.Кладовщики, комплектовщики, грузчики.** З/п 34000 руб. Вахта. МО. Прямой работодатель. Т. 89278512030.

**28.Водители-экспедиторы.** З/п 40000 руб. Вахта. МО. Прямой работодатель. Тел. 8-927-851-20-30.

**29.Охранники с удостоверением.** З/п 36000 руб. Вахта. Москва. Прямой работодатель. Т. 8-927-851-20-30.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515,
"Хыпар"-шăмат кун" – 78353, "Сывлăх" – 11524,
"Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор В.И.СМИРНОВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-22-31, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 7254. Заказ 754.